ХЫПАР

Чӑваш ачисен хаҫачӗ

# Тантӑш

6+

15 (4429) №, 2015, април / ака / , 9
(1931 ҫулхи январӗн / кӑрлачӑн / 12-мӗшӗнче тухма тытӑннӑ).

Хакӗ ирӗклӗ.
Индексӗ: 54802.

ЧУНРИ

## Асрах эс, аннеҫӗм, асрах эс, атте, Мана шеллемерӗр-ҫке темшӗн пӗртте...

**Куҫ умӗнче – Вӑрнар районӗнчи Отиккӑвӑ ялӗ... Лиза васкамасӑр утать. Хутран-ситрен чарӑнкаласа тӑрать, йӗри-тавралла пӑхкалать. Аван-ҫке тӑван тӑрӑхра.**

Авӑ автансем пӗр-пӗринпе ӑмӑртмалла аваттаҫҫӗ. Вӑхӑтран-вӑхӑта йытӑ вӗрнӗ сасӑсем те хӑлхана кӗреҫҫӗ. Ҫывӑхра пӗр ҫурт ҫумӗнче шӑши хӑваласа ывӑннӑ кушак хӗвел ӑшшинче киленсе выртать. Темӗнле тӗлӗк курать ахӑртнех, хушӑран-хушӑ чӗтренкелесе илет. Хутран-ситрен хӳрине вылятать те каллех лӑпланса выртать.

– Пӗҫ-пӗҫ! Пӗҫ-пӗҫ! Кӑнтӑрлах паппа тӑватӑн-им? – тенине илтсен, вӑл, тутлӑ ыйхинчен вӑранса анасларӗ те Лиза еннелле утӑмларӗ. Хапхасем чӗриклетсе уҫӑлаҫҫӗ. Пӗрисем картишрен тухаҫҫӗ, теприсем каялла кӗреҫҫӗ. Ӗҫ вӗресе тӑрать ҫав ялта...

Лиза килтисем ҫинчен шухӑшлать, иртнӗ кунсене чунне ыраттарса аса илет. Уйрӑмах... ашшӗпе амӑшӗ пуҫӗнчен тухмасть... Вӗсене аса илет те... куҫӗнчен куҫҫуль шӑпӑртатать.

– Шел, питӗ шел... Тӑван килте: «Килтех юл, ачам, ан кай», – тесе никам та калакан ҫук. Вутпа ҫунса тӑракан чӗрене нихӑҫан та канӑҫ пулаймӗ, – терӗ вӑл йӗпеннӗ пит-куҫне шӑлса типӗтнӗ май.

Салху та кичем. Хӑш енчен кӑна ҫаврӑнса пӑхсан та, Лизӑн чӗрине хӗпӗртеттерекенни ҫак вырӑнта нимӗн те ҫук. Шухӑшсем пӗр вырӑнта тӑмаҫҫӗ. Ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ сӑнсем ун умне тухаҫҫӗ. Ашшӗпе амӑшӗсӗр иртекен пурнӑҫ ҫав тери хурлантарать ӑна.

Ача чухнехи кунсем, иртнӗ вӑхӑтри тӗтреллӗ ӗмӗт-шухӑш саманчӗсем аса килеҫҫӗ... Пӗр сӑн хыҫҫӑн тепри улшӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫапах та хӗрачан чӗрине пӗр сӑн  хӗвел пек ӑшӑтать – Людмила аппӑшӗ. Ӑна аса илсен, суранланнӑ чӗри лӑш пулать.

Акӑ халӗ те унӑн сӑн-пичӗ хӗвел ҫинче ялтӑртатакан чие ҫулҫи евӗрлӗн йӑлкӑшса илнӗн туйӑнчӗ. Икӗ куҫӗнчен пӑчӑртанса тухнӑ вӗри куҫҫулӗ – савӑнӑҫпа хурлӑх куҫҫулӗ – каллех питҫӑмарти тӑрӑх юхса анчӗ.

– Тавах аттен аппӑшне, Людмила Максимовнӑна. Йывӑр вӑхӑтра мана ӑнланса хӑй хӳттине илнишӗн. Атте-анне вырӑнӗнче пулса ырӑ канаш парса пурнӑҫ сукмакӗпе сулмаклӑн утма пулӑшнӑшӑн, чун-чӗререн юратнӑшӑн, – терӗ хӗр шӑппӑн ҫеҫ.



➲➲➲ 4-мӗш стр.

| Кӑларӑмсем | Индекс | Почта уйрӑмӗсенче | «Чӑваш пичет» киоскӗсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|
| Хыпар | 54800 | 798,06 | 288 | 144 |
| Хыпар-эрнекун | 78353 | 345,54 | 150 | 90 |
| Ҫамрӑксен хаҫачӗ | 54804 | 399,54 | 234 | 144 |
| Чӑваш хӗрарӑмӗ | 11515 | 360,66 | 222 | 141 |
| Сывлӑх | 11524 | 228,90 | 114 | 81 |
| Кил-ҫурт, хушма хуҫалӑх | 54806 | 203,70 | 114 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 297,78 | 168 | 114 |
| Тӑван Атӑл | 11529 | 331,50 | 252 | 198 |
| Капкӑн | 24608 | 166,98 | 150 | 108 |
| ЛИК | 83429 | 144,50 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 327,78 | 192 | 144 |
| Собрание законодательства ЧР | 54847 | 761,52 | 660 | 570 |
| Тантӑш | 54802 | 273,78 | 138 | 90 |
| Самант | 73208 | 187,26 | 162 | 120 |
| Тетте | 73771 | 148,98 | 114 | 90 |

ҪЫРӐНТАРУ – 2015

***«Тантӑш» хаҫатсӑр кил-йышра – кичем, «Тетте» журналсӑр тунсӑх та салху, «Самант» журналсӑр вара – сӗтел пушӑ пулнӑнах. Апла пулсан, туссем, юратнӑ кӑларӑмсене паянах ҫырӑнӑр! Вӗсем сирӗн кил ӑшши пулса тӑччӑр!***

# «Хыпар» Издательство çуртне – медаль




«Хыпар» Издательство çуртĕнче тухса тăракан хаçат-журнал страницисенче физкультурăпа спорт теми пысăк вырăн йышăнать. Пирĕн кăларăмсем республикăра иртекен ăмăртусемпе турнирсем, спортсменсен çитĕнĕвĕсемпе вĕсен пурнăçĕ çинчен вулакана паллаштарсах тăраççĕ.

2014 çулта Сочире иртнĕ Олимп тата Паралимп вăййисен кунçулне чăваш пичет кăларăмĕсенче анлăн çутатнăшăн «Хыпар» Издательство çурчĕн коллективне «XXII Хĕллехи Олимп вăййисен тата XI Хĕллехи Паралимп вăййисем: Сочи, 2014» астăвăм медалĕпе тата РФ Президенчĕ Владимир Путин алă пуснă Хисеп хучĕпе чысланă. Сумлă наградăна «Хыпар» Издательство çурчĕн директорне – тĕп редакторне **Валерий Туркая** Сергей Мельников министр ЧР Спорт министерствин анлă ларăвĕнче пачĕ. Çак медалех «Хыпар» хаçатăн хастар авторĕ **Петр Сидоров** тивĕçрĕ.

ЧР Физкультурăпа спорт министерстви журналистсен «Спорт стилĕ» республика конкурсне те пĕтĕмлетрĕ. «Массăллă спорта тата сывă пурнăç йĕркине пропагандăласси» номинацире «Хыпар» хаçатăн корреспонденчĕ **Андрей Михайлов** çĕнтерчĕ. Конкурсра çавăн пекех хаçатăн яланхи авторĕсем – журналистика ветеранĕ **Юрий Плотников** («Профессие парăнни» номинаци) тата Вăрмар районĕн спорт энциклопедийĕн авторĕ **Анатолий Хованский** («Чи лайăх спорт публицисчĕ») палăрчĕç. Çĕнтерӳçĕсене дипломсем тата парнесем парса чысларĕç.

***О.МАСЛОВ.***

# Асаттесен пехилĕ

Шупашкарти Яков Ухсай ячĕллĕ Культура керменĕнчи «Çăлтăр ушкăнĕ» республика шайĕнче халăхра чăвашлăха аталантарас тĕллевпе «Пехил» конкурс ирттерчĕ. Пĕтĕм тĕнчери тăван чĕлхе кунне халалланă пултарулăх ăмăртăвĕнче ăслăлăх, литература, ӳкерӳ ӳнерĕ, фотографи, педагогика номинацисем пулчĕç. Конкурса шкул ачинчен пуçласа ача садĕнчи воспитательсемпе учительсем таранах хутшăнчĕç. Жюри пултарулăх ăмăртăвне килнĕ ĕçсене хакларĕ.

«Пехил» конкурсри литература секцийĕнче пĕрремĕш вырăна Патăрьел районĕнчи Тусари «Сар хĕвел» ача садĕнче вăй хуракан Наталья Федоровна БУРМИСТРОВĂН «Манас марччĕ...» сăвви йышăнчĕ.

***Геронтий НИКИФОРОВ,***
***Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ.***

## МАНАС МАРЧЧĔ...

Мĕн чул пĕлен чăваш историне,
Мĕн чухлĕ эсĕ илтнĕ ун çинчен?
Чăваш çыннин тумхахлă кун-çулне
Кунран-кунах аса илен...

Этем историйĕ хăватлă та пехиллĕ,
Нихçан та тухмĕ пирĕн чĕререн.
Ватăсене курсан пушшех те тимлĕ
Ыйтса пĕлес килет çĕршывăмăр çинчен.

Тăван çĕр чăмăрĕн хăюллă ачисем,
Халăх телейĕшĕн кĕрешнĕ паттăрсем.
Эсир – чăваш историйĕн чăнни.
Эсир – авалхи пурнăçăн мĕлки.

Çулран йĕрленнĕ чăваш çĕрĕ
Хăват парать малашлăха уçма.
Чăваш сăмахлăхне йăхран тĕпченĕ
Янрать сасси ун çĕр-пин юрăра.

Яш-кĕрĕмсем, калам-ха чунрине:
Чăваш историне пĕрре те манас марччĕ.
Асаттесен хăватлă пехилне
Çĕн пурнăçа кĕртме вăй-хал тупасчĕ.

Тĕнче мехелĕ çапларах:
Пĕри пĕтет, тепри пулать.
Чăвашăн ырă ят анчах
Ĕмĕрлĕхе асра юлать.

# ĂША САЛАМСЕМ

Саламсене пĕлтермелли номерсем:
89876741833
89051975911

**+79603061725.** Çĕмĕрле районĕнчи Вăрманкас ялĕнче пурăнакан **Руслан Владимирович РАФИНОВА** 20 çул тултарнă ятпа тата **Сергей Николаевич ВАНЕЕВА** 18 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Пĕтĕм кăмăлтан ырлăх-сывлăх, юратупа телей, вĕренӳре тата спортра – пур çĕрте те ăнăçу сунатпăр. Телейлĕ пулăр!

***Салампа кӳршисем Анатолий ШАБАЛОВ тата Любовь ИВАНОВА.***

✧ ✧ ✧

Элĕк районĕнчи Пĕчĕк Кăканарта пурăнакан, ĕмĕрех почтальонкăра ĕçлесе Правительство наградине те тивĕçнĕ **Нина Николаевна ЕРМОЛАЕВА** ыран хăйĕн 60 çулхи юбилейне анлăн паллă тăвать. Мăшăрĕпе вĕсем хĕрпе ывăл çуратса ӳстернĕ, пурнăç çулĕ çине кăларнă. Ачисем те хăйсем пекех ĕçчен, пусăруллă. Нина Николаевнăна чĕререн саламласа юман пек çирĕп сывлăх, таса çăлкуç пек тапса тăракан вăй-хал, кунсерен ăнăçупа телей, пысăк ӳсĕмсем сунатпăр.

***Карачура, Кăканар ялĕсенче кунсеренех сана кĕтекенсем.***
Элĕк районĕ.

✧ ✧ ✧

Шкулта «5» паллăпа вĕренсе пынă, хăй вăхăтĕнче хĕсмете те кайса килнĕ, таврăнсан чăн-чăн çĕр ĕçченĕ пулса тимлекен, уй-хир ĕçĕсенче пур çынна та тракторпа пулăшакан, мăшăрĕпе икĕ ывăл тата пĕр хĕр çуратса ӳстернĕ, кашнинех аслă пĕлӳ панă **Евгений Викторович ФИЛИППОВ** çитес кунсенче хăйĕн черетлĕ çуралнă кунне паллă тăвать. Эпир ăна питĕ хисеплетпĕр, чĕререн тав тăватпăр. Çирĕп сывлăх, тулли телей, пур çĕрте те ăнăçу сунатпăр.

***Ял-йыш.***
Элĕк районĕ,
Мăн Карачура ялĕ.

✧ ✧ ✧

Элĕк районĕнчи Мăн Кăканар ялĕнче пурăнакан, Карачурари библиотекăра ĕçлекен, общество ĕçне хастар хутшăнакан **Ираида Васильевна КИРИЛЛОВĂНА** çуралнă кунĕпе саламлатпăр, пурнăçра кунсерен ăнăçу, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр.

***Библиотекăна çӳрекенсем.***

✧ ✧ ✧

**+79603061725.** Шупашкарта пурăнакан **Андриян Димитриевич КАРАСЕВА** çуралнă кун ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм та çирĕп сывлăх, телейлĕ пурнăç, иксĕлми çăлкуç пек вăй-хал, ырлăх та çураçу, çемьере юратупа килĕшӳ, пур çĕрте те ăнăçу сунатпăр. Пурнăç ырă кĕтменлĕхсемпе савăнтарсах тăтăр.

***Салампа тăванĕсем: ИВАНОВСЕМ, ШАБАЛОВСЕМ, АЛЕКСЕЕВСЕМ.***

✧ ✧ ✧

Юратнăран та юратнă тус-юлташăма, Çĕмĕрле районĕнчи Юманай ялĕнче пурăнакан **Мария ГРИГОРЬЕВĂНА** чун-чĕререн çуралнă кун ячĕпе саламлатăп. Чи малтан сана юман пек çирĕп сывлăх сунатăп. Сывлăх пулсан пуянлăхĕ те, ăнăçу та, юрату та – пурте юнашар пулĕç. Яланах çакăн пекех маттур, хастар, пултаруллă пул! Пурнăç çулĕ çинче хăвăн пек ырă кăмăллă, уçă чунлă çынсем кăна тĕл пулччăр! Ăшă йăл кулă ан кайтăр сăнран, ырă хыпарсем савăнтарсах тăччăр! Телейлĕ пул!

***Саламлаканĕ Кристина БАЙБАТОРОВА.***

## КĂСĂКЛĂ

# Тĕлĕнтермĕш çыравçăсем

✓ «А зори здесь тихие...» повесть авторĕн Борис Васильевăн мăшăрне Зоря тесе чĕннĕ. Шăпах вăл Соня Гурвич тата «Завтра была война» повеçри Искра Полякова сăнарĕсен прототипĕ пулса тăнă.

✓ Америка çыравçине, психологне Тимоти Лирие наркотик упранăшăн ярса тытсассăн тĕрмене ăçта вырнаçтарассине палăртма ятарлă тест витĕр кăларнă. Ку лару-тăруччен темиçе çул маларах çак теста Лири хăй шухăшласа тупнă пулнă. Ыйтусене хăйне кирлĕ пек, пĕлсе хуравланă вăл: садпа уй-хир ĕçне юрăхлă типаж шутне кĕнĕ. Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсене кура çыравçа çăмăл режимлă тĕрмене ăсатнă, пахчаçă ĕçне шанса панă. Çур çултан вара Тимоти Лири унтан тухса тарнă.

✓ Эрнест Хемингуэй çыравçа пурнăçĕн юлашки çулĕсенче йăлтах тарăхтарнă, час-часах депресси аптăратнă. Ун хыççăн пур çĕрте те Федераллă тĕпчев бюровĕн (ФБР) агенчĕсем йĕрлеççĕ тесе ĕнентернĕ вăл тăванĕсемпе юлташĕсене. Паллах, ăна ĕненекен тупăнман.

Темиçе хутчен те психиатри клиникинче сипленнĕ Хемингуэй. Унта выртнă хушăра та тусĕсем патне шăнкăравланă: палатăра итлемелли хатĕрсем (жучок) пур тесе çирĕплетнĕ. Телефон калаçăвĕсене те итлеççĕ-мĕн. Электрошок витĕмĕпе Хемингуэй çырайми, шухăшĕсене унчченхи пек ирĕклĕ пĕлтерейми пулнă. 1961 çулхи утă уйăхĕн 2-мĕшĕнче вара килĕнче пăшалтан перĕнсе вилнĕ.

Вуншар çул иртсен çеç тĕрĕслĕх çиеле тухнă. Çыравçă ĕçĕ пирки ФБР органĕсене официаллă йĕркепе ыйтса çырнине хирĕç çапларах хурав килнĕ: çыравçă хыççăн, чăнахах та, йĕрленĕ-мĕн, калаçусене те итленĕ, вăл шутра – психиатри больницинче те. Влаçри çынсене Хемингуэйăн Кубăри хастарлăхĕ килĕшмен, иккĕленӳ çуратнă иккен.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1804 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1322
Пичете апрель уйăхĕн 8-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

(P) паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Илемлĕ вулакансем тупăшрĕç

И.С.Тургенев ячĕллĕ библиотекăра К.В.Иванов çулталăкне халалласа илемлĕ вулакансен конкурсĕ иртрĕ.






Тупăшакансем пурĕ виçĕ ушкăна пайланчĕç. Пĕринче – 12-14, тепринче – 15-17, виççĕмĕшĕнче – 18-22 çултисем. Ăмăрту пуçланиччен ачасемпе вĕрентекенсем тĕрлĕ музыка инструменчĕпе илемлĕ кĕвĕсем каларĕç. Тӳресем чăвашла тата вырăсла вулакансене уйрăммăн хакласси çинчен пĕлтерчĕç.

К.В.Ивановăн «Нарспи» вилĕмсĕр поэмине пĕлмен çын çук ĕнтĕ. Ăмăртура поэмăн сыпăкĕсене чылайăшĕ вуласа пачĕ.

– Мана «Нарспи» поэма питĕ килĕшет. Анчах та тĕп сăнарăн, Нарспин, хăтланăвĕсене ырламастăп. Ăна пула тăватă çын пурнăçран уйрăлать. Çав шутра тĕп сăнарăн çывăх çыннисем те. Манăн шухăшпа, ашшĕпе амăшĕ Нарспие тулăх пурнăçпа пурăнтăр тесе качча параççĕ Тăхтамана. Мăшăр юратман çын пулсан та ăна тĕп тумасăрах çак лару-тăруран тĕрĕс-тĕкел тухма пулмастчĕ-и? – терĕ 4-мĕш лицейра вуннăмĕш класра вĕренекен Настя Орлова.

Паянхи кун та çак ыйтăва татса параймаççĕ критиксемпе литературоведсем. Нарспи ĕçĕ-хĕлне ырлакансем те, хурлакансем те пур.

Ачасемпе çамрăксем Нарспие те, Тăхтамана та сăнлакан костюмсемпе тухса сăвăсем вуларĕç. Тĕлĕнмелле пултаруллă маттурсем пуçтарăннă ăмăртăва.

– Эпĕ питĕ тупăшма юрататăп. Сăвăсем вуласси – манăн чун уççи. Пĕр вăхăт Чăваш наци телевиденийĕнче «Бухты-барахты» телепередача ертсе пыраттăмччĕ. Видеокамерăсем умĕнче пулма хăнăхнăран та пуль пĕр хумханмасăр хутшăнатăп конкурса, – мăнаçланса каласа парать 1-мĕш гимназире вĕренекен Анита Павлова. – Тата кăçал Чăваш патшалăх университечĕнче чăваш филологи уйрăмĕ иртерекен «Хăвна кăтарт – 2015» ăмăртура пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕм. Çитĕнсен вара журналист пулма ĕмĕтленетĕп, – хăйĕн сăмахне савăнăçлăн вĕçлерĕ çиччĕмĕш класс хастарĕ.

Сăвă вулакансем хушшинче лингвист та тупăнчĕ. Акăлчан, француз, китай чĕлхисене алла илнĕ ĕнтĕ 1-мĕш гимназири пиллĕкмĕш «д» класра вĕренекен Екатерина Урачаева.

– Катя питĕ пултаруллă хĕрача. Ăна «Нарспи» поэма сыпăкне парсанах шăкăртаттарса вĕренме пуçларĕ. «Наталия Васильевна, эпĕ сăвă вĕреннĕ чух манăн куç умне тĕлĕнмелле картина тухать», – тет вăл мана. Поэмăри кашни сăмаха куç умне кăларса пĕр такăнмасăр каласа парать вара. Хăйне пур çĕрте те яваплă туять. Халь ĕнтĕ тăрăшсах ют чĕлхесене вĕренет, – мăнаçланса пĕлтерчĕ чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ Наталия Васильевна Прохорова.

Мĕн тери талантлă ачасем! Паллах чи маттуррине суйлама йывăр пулчĕ. Çапах та çаксем çĕнтерӳçĕсен йышĕнче:

**1) Чăвашла чи лайăх вулакан:**

12 – 14: I. Софья Прокопьева (1-мĕш гимнази);
II. Салампи Прокопьева (39-мĕш шкул);
III. Мария Григорьева (61-мĕш шкул);

15 – 17: I. Катя Гордеева;
II. Максим Улбутов;
III. Настя Денисова;

18 – 22: I. 1) Настя Матвеева;
2) Луиза Ильина;
3) Витя Иванов (ушкăнпа вуларĕç, Культура училищи);
II. Раиса Степанова (Культура училищи);
III. Анна Кузьмина (39-мĕш шкул);

**2) Вырăсла чи лайăх вулакан:**

12 – 14: I. Злата Самарина (1-мĕш гимнази);
II. Софья Смирнова (61-мĕш шкул);
III. Павел Симошкин (2-мĕш шкул);

15 – 17: I. Даня Гурьянова;
II. Мария Улитина ;
III. Юлия Ильина.

Çĕнтерӳçĕсене иккĕмеш тапхăрта та ăнăçу сунатпăр!

***Кристина БАЙБАТОРОВА.***

# Чăваш журналисчĕсем – Хусанта




**«Хыпар» Издательство çурчĕн кунне районсенче ирттересси ырă йăлана кĕчĕ. Çак кунсенче вара вăл Тутарстан Республикин тĕп хулинче – Хусанта – пулчĕ. Малашне чăваш кăларăмĕсем пирки ытти регионсенче те пĕлĕç, вĕсемпе çывăхрах паллашĕç, çырăнса илĕç.**

Хусана килсе çитсенех хулан паллă вырăнĕсенче пĕчĕк экскурси иртрĕ. Издательство çурчĕн ĕçченĕсем Муса Джалиль поэта халалласа лартнă палăк умĕнче, Хусан кремлĕнче, Кул Шариф мечĕтре пулчĕç. Мăсăльмансен çурчĕ хăйĕн илемлĕхĕпе, пахалăхĕпе чăннипех те кашнин чуннех тыткăнларĕ. Ун хыççăн журналистсем «Хыпар» хаçат никĕслевçин – Николай Васильевич Никольскийĕн – вилтăприйĕ çинче пулса чĕрĕ чечексем хучĕç. Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев, Н.В.Никольский музейĕн директорĕ Татьяна Степанова, Раççей культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Николай Карягин тата ыттисем те чăвашсен тĕп хаçатне никĕслекене ырă та ăшă сăмахсемпе аса илчĕç.

– Николай Васильевич ятне эпир яланах çӳлте тытăпăр. Вăл пуçарнă ĕçе малалла аталантарма, çӳллĕ шайра тытса пыма сăмах паратпăр, – терĕ Валери Туркай митинга вĕçленĕ май.

Издательство ĕçченĕсен пысăк йышне Халăхсен туслăхĕн çуртĕнче Чăваш наци культура автономин ертӳçи, Чăваш наци конгресĕн вице-президенчĕ Константин Яковлев, Тутарстан халăх поэчĕ Ренат Харис, Тутарстанри Ăслăлăх академийĕн вице-президенчĕ Джавдет Сулейманов, Хусанта тухса тăракан «Сувар» чăваш хаçачĕн никĕслевçисенчен пĕри – Николай Сорокин, Халăхсен туслăхĕн çурчĕн директорĕ Ирек Шарипов ăшшăн кĕтсе илчĕç. Автономи çумĕнчи «Салам» фольклор ансамблĕ илемлĕ те янăравлă чăваш юррине шăрантарса пухăннисен кăмăлне çĕклерĕ.

Валери Туркай «Хыпар» ИÇ директорĕ-тĕп редакторĕ çулçӳревĕн тĕллевĕне, издательство ĕçченĕсемпе паллаштарчĕ. Январь уйăхĕнче «Хыпар» хаçат 110 çул тултарать. Ăна паллă тăвасси шăпах çак мероприятирен пуçланчĕ те ĕнтĕ.

Хăнасем Туслăх çурчĕпе те тĕплĕн паллашрĕç. Халăхсен туслăхĕн музейĕнче, тĕрлĕ наципе культура автономийĕсем валли уйăрнă ятарлă пӳлĕмсене кĕрсе курчĕç. Туслăх çурчĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă май редакци ĕçченĕсем Тутарстанра пурĕ 115 халăх çынни пурăннине, 300 ытла чăваш ялĕ пулнине пĕлчĕç. Туслăх çуртĕнче вырсарни шкулĕ ĕçлет. Унта чăваш ачисем те чылайăн çӳреççĕ. Тĕрлĕ халăх туслăхĕ, кашнин хăйне евĕрлĕхĕ вырсарни шкулĕнче вĕренекенсен алĕçĕсенче уççăн палăрать. Тĕрлĕ халăхăн кил-çуртне сăнлана макетсенчен ятарлă курав та йĕркеленĕччĕ кунта.

Ирек Шарипов чăвашсем яланах пуçарулла та ĕçчен, мал ĕмĕтлĕ пулнине палăртрĕ.

– Чăвашсем паллă çыннисемпе, çыравçисемпе чăннипех те мухтанма пултараççĕ. Вĕсен пултарулăхĕнчен тĕлĕнмелли çеç юлать, – терĕ вăл.

Ринат Харис тутар халăх поэчĕ тăван чĕлхепе тухса тăракан хаçат-журнал яланах, уйрăмах хальхи вăхăтра, пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăннине çирĕплетрĕ. Редакци ĕçченĕсене малашне те тăрăшулăхпа палăрма, çăмăл мар ĕçре ăнăçу сунчĕ.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

1-мĕш стр.

# Асрах эс, аннеçĕм, асрах эс, атте, Мана шеллемерĕр-çке темшĕн пĕртте...

## Пĕчĕк Лиза çеç нимĕн те ăнланайман...

2003 çулхи август уйăхĕн 26-мĕшĕ. Виççĕри Лиза килĕнче амăшĕпе кăна пулнă. Пиччĕшĕ Максим, амăшĕ вырăнне фермăна ĕне сума кайнă, ашшĕ килкартинче кăштăртатнă. Хĕрача хăй тĕллĕн выляса çӳренĕ. Сасартăках пӳртре сĕрĕм явăнма тытăннине, унтан çулăм алхаснине курсан вăл хăраса ӳкнĕ. Тĕтĕмпе чыхăнса кайнăскер хăйне валли çăлăнăç шыранă...

Урамра сасартăк такам калама çук тискер, хăрушă сасăпа кăшкăрни илтĕннĕ.

– Пуша-ар!.. Çуна-ать!..

Пурте урама васканă. Васильевсен çуртне вут хыпнине асăрхаса унталла чупнă. Сывлăшра çулăм çӳлелле юпа пек тапса хăпарнă. Çулăм юпинчен пур еннелле хĕм сирпĕннĕ...

Шалта ача пуррине астуса тахăшĕ кантăка çапса çĕмĕрнĕ:

– Лиза! Лиза! Кунталла, чӳрече еннелле килсем! – тесе хыттăн кăшкăрнă.

Сиксе чĕтрекен хĕрача сасă еннелле ăнтăлнă. Хайхи арçын ăна çунакан пӳртрен самантрах туртса кăларнă. Ку вăл ашшĕн пиччĕшĕ, Юрий Максимович, пулнă.

Шел, Максимпа Лизăн амăшĕ вут-çулăмран тухайман... Ăна килтисем ĕçе кайнă пулĕ тесе шухăшланă. Çавăнпа çунакан çурта никам та кĕрес темен. Пушар хуралĕнче ĕçлекенсем «хĕрлĕ автана» парăнтарсан, Надежда Вячеславовнăн çунса хуралнă ӳтне тупнă...

– Ах, мĕн тери асапланса чунĕ тухрĕ пу-у-уль? Ах, – тенĕ кӳршĕ-аршă çамрăк хĕрарăма хĕрхенсе.

Çемье пусĕ, Владислав Максимович, çак хăрушă ӳкерчĕке курсан, хăй ăçталла утнине пĕлмесĕр пĕрре урамалла тухнă, тепре каялла кĕнĕ. Чылайччен çӳренĕ вăл çапла ним пĕлмесĕр, алчăранă куçĕсемпе урăх ним курмасăр...

Ял халăхĕ, тăван-пĕтенĕ юлашки çула ăсатнă икĕ ача амăшне. Пĕчĕк Лиза çеç хăйсене инкек пырса çапнине ăнланайман... Ĕмĕрне те урăх амăшĕ ытамĕнче пулса, унăн ăшшине туйса, илемлĕ сассине илтеймессе тĕшмĕртме те пултарайман.

– Юлашки хут пăхса юлăр аннĕре... – тенĕ виле пытарма килнĕ çынсем Максимпа Лизăна.

Тупăкра куçне хупнă, питне çĕр сăнĕ çапнă амăшĕ выртнă. Ним шухăшлама та пĕлеймен Лиза. Ытла та пĕчĕк пулнă-çке вăл...

Хĕрача хăй тĕллĕн, никам пулăшăвĕсĕр ултă çултах вулама, çырма вĕреннĕ. Шкулта вара «5» паллăпа çеç вĕреннĕ.

## Инкек çине синкек

Амăшĕсĕр тăрса юлнăранпа ĕнтĕ миçемĕш çул хĕл хăйĕн, шурă, кăпăшка, ăшă тăлăпĕпе çĕр-аннемĕр çурăмне витсе çывăрттарман-ши? «Вăхăт темле хуйха-суйха та йăвашлатать, вара йăлтах мантарать. Е тата ача-пăча пачах кулянма пĕлмест тесе çирĕплетет хăшĕ-пĕри. Çапла шухăшлаттаракан сăлтав та пур иккен: пĕчĕк этем таталса макăрнă хыççăнах ахăлтатса кулма пултарать, питçăмарти çинчи куççулĕ те унăн çийĕнчех типет тесе калать. Ку сăмахсем тĕрĕс мар. Аннешĕн халĕ те чун ыратать. Ăна пытарнă кунхине тунă сăнӳкерчĕксене пăхса паянхи кунччен мĕн чухлĕ куççуль кăларман-ши?» – тесе пăшăрханнă шкул сукмакне такăрлатакан Лиза.

Ашшĕ, Владислав Максимович, йывăр лава пĕччененех туртса пынă. Ачисене мĕн кирлине йăлтах пама тăрăшнă. Тутлă апат-çимĕç пĕçерессипе те ăна çитекен пулман. Çăкăрĕ тата мĕн тери кăпăшка пулнă унăн! Пушар сиен кӳнĕ хуралтă вырăнне çĕннине хăпартса витсе те лартнă ĕçченскер.

– Çак çĕнĕ пӳрте хăвăртрах кĕресчĕ. Вара пурнăçĕ тата та çăмăлланĕччĕ, – ĕмĕтленнĕ кил хуçи.

Çулсем сисĕнмесĕр иртнĕ. Пиччĕшĕ шкултан вĕренсе тухнă. Ăна халăх йăли-йĕркипе салтака та ăсатнă. Çу çулĕпе кайса пыл çулĕпе каялла таврăнма пилленĕ.

2014 çул. Лизăна ашшĕ лагере ăсатса янă.

– Хĕрĕм, лайăх кан. Вăхăт çитсен, апрелĕн 23-мĕшĕнче каялла килсе илĕп, – тесе тĕпренчĕкне ыталаса ăшшăн çупăрласа хăварнă.

Лагерьти хаваслă кунсем çав тери хăвăрт иртнĕ. Хĕрача ачасемпе çăмăллăнах туслашнă, пĕрле тĕрлĕ вăйă-кулăра савăннă, мероприяти-конкурссене хутшăннă.

Апрелĕн 21-мĕшĕ. Лагере Люда аппăшĕн ывăлĕ килнĕ.

– Лиза, киле каймалла. Пуçтарăн, – тенĕ кĕскен çеç.

Хĕрача унăн сӳрĕк куçĕсене тӳрех асăрханă.

– Епле апла? Ара, вăхăт çитмен-çке киле кайма? Эпĕ отряд командирĕ. Туссене вăхăтсăр пăрахса кайма аван мар вĕт-ха. Сывпуллашу каçне те асра юлмалла ирттерессĕн. Чим, атте ман пата хăй килетĕп терĕ-çке. Мĕн пулнă? – çийĕнчех кăсăкланнă хайхискер.

– Лиза, каймалла... Итле мана, – тенĕ каллех кĕскен.

Аппăшĕн ачи урăх пĕр сăмах та каламан... Лиза вара лагерь вĕçленнĕ куна йăлтах урăхларах курма ĕмĕтленнĕ-çке. Ак çапларах... Çав кунхине ларма-тăма пĕлмест вăл. Йăлт та япăх пăхать кантăкран. Часах вăл лагерь çулĕ çинче ашшĕне курать. Алăкран ăна хирĕç тухса чупать вара. Ашшĕ те асăрхать юратнă хĕрне, уттине хăвăртлатать. Тĕл пулаççĕ те ĕмĕр курман пек ыталаса илеççĕ пĕр-пĕрне...

Ĕç-пуç вара вăл шухăшланă пек пулса тухайман...

Лизăна ашшĕ вилнине кайран çеç пĕлтернĕ. Пуçне аллисем çине хурса ăвăс çулçи пек чĕтренсе макăрнă Лиза.

– Мĕн тăвас ĕнтĕ халĕ манăн, мĕн тăвас?.. Ăçта кайса кĕрес?.. Мĕнпе лăпланас? – тесе ĕсĕкленĕ.

Çапла... Юратнă çынни ывăлне те салтакран кĕтсе илеймен, хĕрĕ патне те лагере çитеймен...

## Люда аппа маншăн – аттепе анне!

Паян Лиза Васильева Вăрнарта ашшĕн тăванĕ Людмила Максимовна Бурмистрова патĕнче кун-кунлать. Çав вăхăтра вара Вăрнарти 2-мĕш шкулăн тăххăрмĕш космонавтика класĕнче тăрăшса, малашнехи пурнăç пирки ĕмĕтленсе ăс пухать. Юратнă предмечĕсем те нумай хĕрачан.

– Чăваш чĕлхине çав тери кăмăллатăп. Атте-анне чĕлхине епле юратмалла мар-ха? Пĕлтĕр çак предметпа иртнĕ район ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăна тухрăм, кăçал – виççĕмĕш! Кăтартăвĕ япăх мар вĕт-ха! Хамăн çитĕнӳпе кăмăллă. Хими урокĕсем те кăмăлăма çĕклеççĕ. Çавăнпа тухтăр пулма ĕмĕтленетĕп, – паллаштарчĕ хăй шухăшĕсемпе мал ĕмĕтлĕ хастар пике.



...Чăваш чĕлхи урокĕнче вĕрентекен:

– Паян сочинени çырăпăр. Тема ятне хăвăр суйлăр. Акă тулта мĕн тери хитре çанталăк. Хĕвел шевли камăн кăмăлне хавхалантармĕ? Кайăксем вĕçсе килни пирки те, хăвăр юратнă чĕрчунсем çинчен те сăнлама пултаратăр. Е тата тин çеç вăраннă хитре çунатлă лĕпĕш вĕлтĕртетсе вĕçсе иртни те чунсене çĕклентерет мар-и? Пахча карти çумĕпе ӳсекен шурă хурăнсем те кĕçех симĕс тум тăхăнĕç. Атя, ĕçе пуçăнар... Кам мĕнле тема çутатасси хăвăртан килет. Чи ăнăçлисене хаçата ярса парăпăр, – терĕ педагог ачасемпе ăшшăн калаçнă май.

Сочинени çырасси Лизăна хăйĕн ĕмĕрĕнчи чун асапĕсене аса илтерчĕ... Вăл хуллен пĕшкĕнсе сумкине парта айĕнчен кăларчĕ, дневникне илсе хăй умне хучĕ. Шалта – юратнă амăшĕн пĕртен-пĕр сăнӳкерчĕкĕ. Ăна вăл тахçанах дневник хушшинче упрать. Чунĕ ыратсан е тунсăха путсан, самантрах çав хаклă сăнӳкерчĕке алла илет... Ах, куççульсĕр те пăхаймасть-çке вăл амăшĕ çине... Сăнӳкерчĕк тытнă алли те чĕтрет. Пăлханнипе тата кулянниле...

Халĕ те чунĕ ыратса пăчăртанчĕ. Йĕри-тавралла тинкерчĕ Лиза. Пурте пуçĕсене пĕксе хĕрӳ ĕçе тытăннă та. Пикен умĕнчи тетрачĕ çеç çав-çавах таса-ха. Ассăн сывларĕ вăл. Акă каллех унăн куçĕсем сăнӳкерчĕкри амăшĕн куçĕсемпе тĕл пулчĕç.

«Аннеççĕм, кала-ха, мĕнрен пуçламши çырма? – пăшăлтатрĕ Лиза, амăшĕ хурав пама пултарнăн. – Тĕрĕс калатăн, аттепе анне çинчен çырмалла. Эсир манăн чĕререн нихăçан та тухас çук... Юратнă анне... Эсĕ пирĕнтен уйрăлса кайнăранпа нумай çул иртрĕ. Каçар, санăн сăнарна тĕтрелле çеç астăватăп. Кайран çулсем шуса иртнĕ тата хам çитĕннĕ май, сана пытарнă кун ӳкернĕ сăнӳкерчĕксене час-часах алла илме пуçларăм... Халĕ те чуна ыраттарса пăхатăп... Аттеçĕм, астăватăн-и, виççĕн епле туслă пурăннине? Эсĕ, пичче тата эпĕ. Эх, мĕн тери иртĕхтереттĕн эсĕ мана! Мĕн ыйтнине йăлтах пурнăçлама тăрăшаттăн... Эсĕ, атте, çав тери пысăк ĕмĕтсемпе пурăнаттăн вĕт-ха. Шел, шăпу йăлтах урăхла çаврăнса тухрĕ. Эсĕ те, анне пекех, ĕмĕрлĕхех пире пăрахса кайрăн. Çав пӳрте туса пĕтерсе телейлĕ кунсемпе пурăнаймарăмăр. Хитре тĕпел кукринче пире, ывăлупа хĕрне, тутлă апатпа сăйласси пулаймарĕ. Пирĕнтен кайнăранпа кĕçех пĕр çул çитет... Иртнĕ вăхăтăн кашни кунĕпе санпах пурăнтăм, аттеçĕм... санпах. Ялан аса илнĕрен ахăртнех, тĕлĕкре те час-час манпа ăшшăн калаçатăн, ырă сĕнӳсем парасшăн ăнтăлатăн. Ку ырă самант нумайăха тăсăлмасть çав. Куçа уçса яратăп та эсĕ çухалатăн... Пĕлетĕп, тем чухлĕ макăрсан та... эсир урăх нихăçан та пирĕн пата каялла таврăнаяс çук. Аттеççĕм, аннеçĕм... Питĕ тунсăхлатăп, сирĕн чун-чĕре ăшши çитмест мана. Кун çути парнеленĕшĕн – пысăк тав! Халĕ эпĕ пĕрре те начар пурăнмастăп. Мана Люда аппа хăй ачи пекех юратса пăхать: çитерет, тумлантарать, вĕрентет. Мана ăнланса хăй хӳттине илнишĕн ăна тав тăватăп. Ĕнтĕ вăл маншăн аттепе анне вырăнĕнче... Шкулта тăрăшса вĕренетĕп. Туятăп: эсир манăн çитĕнӳсемшĕн савăнатăр... Кашни утăма çӳлтен пăхса-сăнаса тăратăр ахăртнех. Юратса йывăрлăхсенчен те тухма пулăшатăр пек туйăнать.

...Манăн аттепе анне таврăнмалла. Эпĕ вĕсене тӳсейми кĕтетĕп. Ял вĕçне тухатăп, укăлча карти çине улăхса ларатăп. Аякка-аякка тинкеретĕп. Таçта инçетре симĕс вăрман курăнать. Хальхаль çав катаран сумкăсем йăтнă аттепе анне сукмак çине тухассăн туйăнать. Чĕрем сиксе тухасла тапать. Тĕлпулу чунтан хумхантарать. Сахал-и, нумай вăхăт иртрĕ-и, сиссе те юлаймарăм, пăхатăп: аттепе анне аларан-алла тытăнса килеççĕ. Эпĕ вĕсене хирĕç савăнса ыткăнатăп. Мана курсан вĕсем те калама çук хĕпĕртеççĕ. Иккĕшĕ те питрен-куçран чуптума тытăнаççĕ. Эпĕ те юратнă çыннăмсене хыттăн ыталатăп...

Эх, ку, паллах, йăпанулла шухăшĕмĕт юххи çеç... Лăпкă çывăрăр, аттеçĕм, аннеçĕм... Эпĕ сире юрататăп».

Çырса пĕтерсен, Лизăн куççулĕ тетрадь çине пăт та пат тумларĕ... Çапла чун ыратăвне хут çине çырсан çăмăлрах пулнине чухларĕ Лиза. Капла ашшĕпе тата амăшĕпе куçа-куçăн тĕлпулса калаçнăн туйрĕ...

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*

Вăрнар районĕ,
Вăрнарти 2-мĕш шкул.

# Анне мана çуратнă, шур катанпа чĕркенĕ...

Асанне хаçат-журнал вулама питĕ кăмăллать. Кĕнекесене те алăран ямасть пушă вăхăтра. Пире те хăйĕнчен тĕслĕх илме ыра сунать.

– Лисук, санăн та юмах-халап е сăвă-калав шĕкĕлчемеллех. Куна ахаль irттерес çук. Ăс-тăнна, тавракурăмна аталантарас тесен халех кĕнекепе туслă пулмалла, – тет пуçран ачашласа.

Унăн сăмахĕнчен нихăçан та иртместĕп эпĕ. Вăл мĕн калани – маншăн саккун. Паян кăнтăрла кÿршĕри йĕкĕреш Марукпа Тарук ман пата выляма касрĕç. Тĕрлĕ пуканесемпе чылайччен килентĕмĕр.

– Ну, ачасем, радиопа чăваш спектаклĕ янăрать. Халĕ шăпăртрах ларăрха, – тесе асăрхаттарчĕ асанне пире.

Унпа килĕшсе пуçсене сĕлтрĕмĕр. Юратнă çыннăм вара тенкелне радио çывăхнерех шутарчĕ. Артистсен калаçăвне итленĕ май алса çыхрĕ вăл. Çак вăхăтра Марук алăри пуканене вăйпах туртса илчĕ те кăмака çинчен ÿкнĕ пекех çари кăшкăрса ятăм.

– Илтнĕ пултăр,
Пĕлнĕ пултăр:
Кам та кам чĕнекене
Пырса чĕпĕтмелле пултăр!

Шăприн – шăп! – терĕ те асанне... çăвара аллăмпа хупларăм. Чăнах, мĕн янăрашса паратăп-ха? Марук манран пукане илнĕрен-и? Выляса йăлăхсанах каялла тавăрса парать ĕнтĕ вăл. Аванмарлантăм, çиййĕнчех асаннерен каçару ыйтасшăнччĕ. Анчах шавлама юраманнине асра тытса шăплантăм. Спектакль пĕтсенех асаннерен пĕрре çеç мар, пин хут каçару ыйтатăпах! Пĕлетĕп, вăл мана каçаратех. Мĕн-ма тесессĕн эпĕ унăн юратнă мăнукĕ.



Чăвашсене эп хам куртăм:
Вĕсем çапла канаççĕ,
Ак çапла, ак çапла
Вĕсем çапла канаççĕ.



Кушак ури – нимĕр,
Ача ури – тимĕр.
Кушак ури – çĕрĕк,
Ача ури – çирĕп.



Анне мана çуратнă,
Шур катанпа чĕркенĕ,
Атте мана ÿстернĕ,
Шăнкăрчă пек вĕçтернĕ

*Элиза ВАЛАНС хатĕрленĕ.*

# Мăнкун умĕнхи мыскара

Çуркунне те çитрĕ. Тăрисем вĕçсе килчĕç, юр ирĕлет, чи асамлă вăхăт çывхарать.

Пурăнаççĕ тет пĕр инçетри ялта мыскара курма юратакан ачасем. Е вĕсем вăрмана çĕркаçма каяççĕ те тилле тĕлпулаççĕ, е лаша çине утланса ăмăртмалла чупаççĕ... Хальхинче вара мыскарасăсем тăванĕсене уяв йĕркелесе пама шут тытрĕç. Нумай пуç ватрĕç ачасем, анчах нимĕн те шухăшласа кăлараймарĕç. Акă Маша хавасла ярмăркка ирттерме сĕнчĕ. Анчах Петьăна ку килĕшмерĕ. «Тин кăна Çăварнире санăн ярмăрккуна ирттертĕмĕр, йăлăхрăмăр ĕнтĕ», – кăмăлсăрланчĕ вăл. Ачасем малалла шухăшлама тытăнчĕç...

«Атьăр уçланкăра чей ĕçĕпĕр, Мăнкун ячĕпе!» – терĕ сасартăк Олег. Ку шухăш пурне те килĕшрĕ. Алина хушса хучĕ: «Анчах ку Мăнкун уявĕ пекех пултăр тесен çимеллисем те хатĕрлемелле тата уçланкăна илемлетмелле».

Ушкăн ертÿçи Федя пайланса ĕçлеме сĕнчĕ. Хĕрачасен çимелли хатĕрлемелле тата уçланкăна илемлетмелле. Олегпа Мишăн вĕсене пулăшмалла. Ытти арçын ачасен Федьăпа кăчкă патне каймалла. Çапла калаçса таталчĕç.

Акă хĕрачасенчен çурри Катя килĕнче çимелли хатĕрлет. Туслă йыш кулич тата кукăль пĕçерме, чие компочĕ вĕретме, çăмарта хĕретме шут тытрĕ. Арçын ачасенчен çурри юханшыв тепĕр енне кăчкă патне каймалла пуçтарăнчĕ. Ыттисем вара уçланкăна капăрлатма юлчĕç.

Тĕпелти ĕçсем йывăртарах пыраççĕ-ха. Кулич мĕнле пĕçермеллине никам та йĕркеллĕ пĕлмест. Катя асламăшĕнчен пулăшу ыйтрĕ. Кинемей савăнсах рецептпа паллаштарчĕ, ăнăçу сунчĕ. Йывăр та мар иккен. Хĕрачасем çăмăллăнах ĕçе пуçăнчĕç. Маша чуста çăрчĕ. Алина кулич формисене хатĕрлерĕ. Катя вара глазурь турĕ. Пулчĕ те. Халĕ çакна духовкăна лартмалла.

«Духовкăна мĕнле чĕртмеллеши? Эпĕ пĕлместĕп...» – терĕ Катя кулянса. «Эпĕ анне мĕнле ĕçленине курнă. Пĕрре те йывăр мар. Кур, малтан шăрпăк чĕртетĕн, унтан çак пускăча пусатăн. Акă, хатĕр», – терĕ Маша.

«Мана анне шăрпăкпа выляма юраманнине каланăччĕ...» – хушса хучĕ Алина. «Пăрах! Эпир пĕчĕк мар ĕнтĕ», – пÿлчĕ ăна Катя, шăрпăк тытрĕ те духовка алăкне уçрĕ. Пускăчне перĕнсе ĕлкĕреймерĕ – асламăшĕ чупса çитрĕ. «Мĕн тăватăр-ха эсир? Пушар кăларатăр вĕт! Ачамсем, хăвăра пĕтеретĕр вĕт!» – кăшкăрма пуçларĕ вăл. «Каçар пире, асанне, эпир урăх ун пек тумастпăр», – пăшăлтатрĕ Катя. «Апла маттурсем. Духовкине хамах чĕртсе паратăп. Анчах вутпа выляма юраманнине яланах асра тытăр», – йăвашшăн кулса калаçрĕ асламăшĕ.

Акă часах кулич тата кукăль пиççе тухрĕç.





*Диана ИВАНОВА* (**Вăрмар районĕ, Энĕшпуç**) *ÿкерчĕкĕ.*

Çав вăхăтра арçын ачасем юханшыв патне çитнĕччĕ. Урамра вăйлă çил çĕкленнĕччĕ. Юханшыв сарăлса кайнине пурте асăрхарĕç. Çавăнпа кăчкă туратне мĕнле татасси пурне те кулянтарчĕ. «Йывăç çине хăпармасан туратне хуçса илеймĕпĕр пуль», – терĕ Федя. Ку ĕçе тума Петя килĕшрĕ. Вова ăна ÿкесрен сыхлама шантарчĕ.

Петя йывăç çине хăпарчĕ, туратне татма пуçларĕ çеç – çил вăйланса кайрĕ те арçын ача шыва ÿкрĕ. Телее, юнашарах Мишăн ашшĕ, Витя пиччĕ, иртсе пыратчĕ. Вăл мĕн пулса иртнине курсанах чупса пычĕ, Петьăна шывран туртса кăларчĕ. «Эх, шăпăрлансем, кăшт çеç инкек пулмастчĕ вĕт! Кун пек юрамасть. Мана чĕннĕ пулсан эпĕ сире хаваспах пулăшăттăм», – терĕ Витя пиччĕ. «Каçар, атте, эпир шухăшласа илеймерĕмĕр. Пĕтĕмпех хамăр тăвасшăнччĕ», – тавăрчĕ Миша. «Ну, юрĕ. Пĕррелĕхе каçарăп. Анчах тек кун пеккине курам мар. Халĕ эпĕ Петьăна килне илсе кайăп, атту шăнса чирлĕ вăл», – терĕ Витя пиччĕ хыттăн.

Кăчкă çителĕклех халĕ. Арçын ачасем уçланкăна таврăнчĕç. Кунта вара пĕтĕмпех хатĕр: сĕтел-пуканне лартнă, вылямалли вырăн пур, магнитофон янăрать. Хĕрачасене кĕтсе илмелли çеç юлчĕ.

Мишăпа Олег пурне те уява чĕнме чупрĕç. Петьăна та кĕрсе курас терĕç. Арçын ача хăйне лайăххах туять иккен, çавăнпа вăл та уявра пулĕ.

Акă хĕрачасем çимелли илсе килчĕç, сĕтел янтăларĕç. Уçланкăра хăнасем нумайлансах пыраççĕ. Тата, паллах, кашниех: «Христос чĕрĕлнĕ!» тет те хăйне хирĕç: «Чăн чĕрĕлнĕ!» – тенине илтет.

Пурте пуçтарăнсан Катя хăнасене сĕтел хушшине чĕнчĕ. «Хаклă хăнасем, сире паянхи уяв килĕшессе шанатăп. Анчах манăн асанне ыра ĕç туса пире вĕрентсе илмесен çапла уяв пулмĕччĕ ĕнтĕ», – терĕ вăл.

«Тата, паллах, пирĕн уяв Витя пиччесĕр те пулаяс çукчĕ. Вăл паян Петьăна çăлса хăварчĕ», – сăмах хушрĕ Федя.

Пурте йăл кулса хăналанма пуçларĕç. Ун хыççăн конкурссем иртрĕç, юрă-ташă хаваслăх парнелерĕ. Уяв вĕçĕнче пурте ачасене тав турĕç те килĕсене саланчĕç. Çапларах иртрĕ ачасен Мăнкун умĕнхи мыскари.

**Дмитрий МЯСНИКОВ.**
Самар облаçĕ,
Шунтал районĕ,
Аксаку шкулĕ.

# «Сывлăхра» – сывлăх

Муркашри «Сывлăх» ача-пăча спорт шкулĕ тата физкультурăпа спорт комплексĕ хăйĕн ӳсĕмĕпе, ĕçĕсемпе республикăра палăрма ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Унта сывлăха çирĕплетме çӳрекенсен йышĕ кунсеренех ӳсет. Ку унăн ĕçченĕсене те савăнтарать. Çамрăксен спортри ӳсĕмĕ, çитĕнĕвĕ вара пушшех те хавхаланса ĕçлеме вăй-хăват парать.

– Юлашки вăхăтра пирĕн комплекса çамрăксем чылайăн çӳреме пуçларĕç. Пулас ашшĕ-амăшĕ те хăйсен сывлăхне çирĕплетме тăрăшать. Тĕрлĕ хусканупа кĕлеткене çирĕплетнисĕр пуçне ăс-тăн вăййисене те выляма кăмăллаççĕ, – каласа панĕ директор заместителĕ Алексей Валерьевич Слепнев.

Пысăк, çутă, таса, икĕ хутлă спорт комплексĕ – чăн-чăн сывлăх керменĕ. Кĕрешӳçĕсен залĕсем, ача-пăча искусствисен шкулĕ, пысăк бассейн, теннис, шашка-шахмат, бильярд залĕсем спортпа туслашас текенсене яланах йышăнма хатĕр. Комплексăн хоккей лаптăкĕнче вара чăн-чăн арçынсем вылякан вăййа кăмăллакансем тĕрлĕ ăмăртăва хатĕрленеççĕ. Районти, республикăри, регионсенчи, Раççейри тупăшусенче кунти спорт ушкăнĕсем тăтăшах хăйсен маçтăрлăхĕпе тĕлĕнтереççĕ. Призлă вырăнсене те чылай тивĕçнĕ вĕсем «Сывлăх» комплекс уçăлнăранпа.

– Шкул ачисем каникулта та чылайăн çӳреççĕ кунта. Çулла вĕсем уйрăмах комплекс çумĕнчи кӳлĕре катамаранпа ярăнма, бассейнра ишме, футбол выляма кăмăллаççĕ, – терĕ Алексей Валерьевич.

# Ишев урокĕ – чи юратни



«Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн алăкĕсем яланах уçă. Ача-пăча хĕвĕшет çеç кунта. Акă, Ярапайкасси шкулĕнчи тăваттăмĕш классем, сăмахран, кашни ытларикун бассейна ишме çӳреççĕ. Ачасем çак куна чăтăмсăррăн кĕтеççĕ.

Кашни заняти 45 минут пырать. Хĕрачасемпе арçын ачасем комплекс умне çитсе автобусран тухсанах ятарлă жилетсем кăларса вĕсене вĕрсе хăпартма пуçларĕç. Фойене кĕрсен Эдуард Александрович Гордеев физкультура вĕрентекенĕ тата тренер тăваттăмĕшсене стройпа тăратрĕ. Пурин те шывра ишмелли ятарлă тум пуррипе çуккине тĕрĕслерĕ. Хыççăн бассейнта заняти пуçланчĕ. Ачасем икĕ ушкăна пайланчĕç. Пĕринче – ишме пĕлекенсем, тепринче – ишме пĕлменнисем. Пĕремĕш ушкăнпа Эдуард Александрович ĕçлерĕ. Çамрăк ишевçĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртмалла ишрĕç, норматива тултарас тĕллевпе те ăмăртрĕç. Тепĕр ушкăна вара Елена Владимировна Потапова инструктор ертсе пычĕ. Вăл ачасене шывра тĕрлĕ хускану, хăнăхтару тума вĕрентрĕ. Заняти вăхăтĕнче ачасене кусран вĕçертмелле мар. Инкек-синкек сиксе тухасран Людмила Николаевна Ярикова медсестра асăрхасах тăрать. Вăл урок вăхăтĕнче тренерсемпе пĕрлех пулчĕ.

Тăваттăмĕшсем бассейнра чунтанах киленчĕç. Çакăн пек хаваслă тепĕр урок ирттерсен те хирĕç пулмĕччĕç ахăртнех.

– Пирĕн чи юратнă уроксенчен пĕри вăл – бассейнта ишесси! – калаçрĕç ачасем хĕпĕртесе. Çĕкленӳллĕ те хаваслă кăмăл-туйăмпа тухрĕç вĕсем спорт комплексĕнчен.

– Шывра ишни сывлăха, хул-çурăма çирĕплетме пулăшать. Кăмăл-туйăм енчен те ачасем çирĕпрех пулаççĕ. «Вĕренӳ программине ишев урокĕсене кĕртни питех те лайăх. Шăпăрлансем хăйсене шывра тытма хăнăхсан кӳлĕ-пĕвере шыва кĕме те пултараççĕ, юханшыв хĕрне вĕсене шикленмесĕрех яма пулать. Ачасен ишме пĕлмеллех. Çапах та аслисем пĕрле пулсан шанчăкăлăрах», – тет ашшĕ-амăшĕ пире, вĕрентекенсене, тав туса, – терĕ Эдуард Геннадьевич. – Анчах хăв лайăх ишме пĕлсен те хăрушсăрлăх правилисене яланах асра тытмалла. «Шывăн турачĕ çук», – тесе ахальтен каламан.

# Ӳркевпе çитĕнӳ пулаймĕ

Вуннăмĕш класра вĕренекен Кристина Кожанова ачаранах спортпа туслă. Хăйĕн çитĕнĕвĕсемпе шкулта çеç мар, районта, республикăра та чылай палăрнă. Йĕлтĕрпе чупса, уйрăмах биатлонра маттур вăл. Çак спорт тĕсĕн вăрттăнлăхне алла илме, хăйĕн маçтăрлăхне ӳстерме Кристина Шупашкарти ачасемпе çамрăксен Олимп резервĕсен 2-мĕш шкулĕнчи Виталий Владимир Федотов ЧР тава тивĕçлĕ тренерĕ пайтах пулăшнă патне çӳрет.

– Йĕлтĕр çине пуçласа тăваттăмĕш класра тăтăм. Ун чухнех питĕ килĕшнĕччĕ мана. Çавăнтанпа йĕлтĕр спорчĕ патне туртăм вăйлансах пычĕ, – каласа панĕ Кристина.

Тĕрлĕ ăмăртăва вăл кашнинчех çĕкленӳллĕ кăмăлпа хутшăнать. Çĕнтерӳ патне чунтан ăнтăлаканскерĕн пухмачĕнче вăтăр ытла медаль. Грамотăсемпе дипломсен шучĕ те пысăк. Нумай пулмасть маттур хĕрача Ижевскра иртнĕ çамрăк йĕлтĕрçĕсен спартакиадинчен çитĕнӳпе таврăннă.

– Çирĕп чунлă вăл. Яланах тĕллевĕсене пурнăçлама тăрăшать, – мухтарĕ Эдуард Александрович тăрăшуллă хĕре.

– Пĕррехинче мана ăмăртăва илсе каясшăн марччĕ. Питех те кулянниpe йĕрсех ятăм. Вара вĕрентекенсем хăйсемпе пĕрле илчĕç, – йăл кулса каласа панĕ Кристина иртнине аса илсе.

Вăл ăмăртусене çӳреме кăмăллать. Кашнине хутшăнма ăнтăлать. Физкультурăпа спорта юратасси мĕнрен пуçланнă-ши? Кристина аппăшĕ спортра хастар иккен. Шăпах унран тĕслĕх илет те вăл. Акă ăçта иккен çитĕнӳсен, спорта юратассин туртăмĕн вăрттăнлăхĕ.

– Пирĕн атте те шкулта вĕреннĕ чухне спортпа туслă пулнă, – пĕлтерчĕ хĕр-упраç. – Эпир аппапа ăна хывнă пуль.





Хул-çурăма çирĕплетмешкĕн Кристина пушă вăхăтра та 15 çухрăм таранчченех чупать. Хăш чухне ăмăр çанталăка пăхмасăрах çухрăмсене парăнтарать. «Ӳркевпе çитĕнӳ пулаймĕ», – тет пике çирĕппĕн.

Спортпа туслашнă хыççăн кăмăл-сипет çирĕпленнине, кăтартусене ялан лайăхлатас килнине палăртрĕ вăл. Чунтан тăрăшни нихăçан та сая каймасть çав.

# Тăрăшулăха кура – хаклавĕ

– Инна пур предметпа тенĕ пекех районта иртекен олимпиадăсене хутшăнса малти вырăнсене йышăнать, – каласа парать ун пирки Алевтина Геннадьевна Димитриева директор заместителĕ мăнаçланса.

Пĕрремĕш класранах вĕренӳ отличници пулнă Инна Сорокина халĕ вунпĕрмĕшĕнче вĕренет. Кашни предмета юратаканскер вĕрентекенĕн пур сăмахне те ăса хывать.

– Вăл пур ĕçе те тĕплĕн тата вăхăтра пурнăçлать. Уроксене яланах хатĕрленсе килет. Тантăшĕсем Иннăна хисеплеççĕ, вăл лайăх ертӳçĕ те, – малалла мухтарĕ тăрăшуллăскере Алевтина Геннадьевна.

Ахальтен каламасть ĕнтĕ вăл çапла. Инна питĕ яваплă-çке. Вăл темиçе çул шкулти ача-пăчапа çамрăксен организацийĕн ертӳçин тивĕçне пурнăçланă. Тантăшĕсене тĕрлĕ конкурса хастар хутшăнтарнă, çĕнӳ-канашпа пулăшса пынă. Кĕçĕннисемшĕн явап тытма çăмăл мар пулсан та Инна вĕсемпе часах пĕр чĕлхе тупаять.

Вĕренӳре, спортра, обществăлла ĕçсенче чылай çитĕнӳпе палăрнă маттурскер. Ăслăлăх конференцийĕсемпе ăс-тăна тĕрĕслемелли конкурссенче те малта. Юлашки вăхăтра Инна тĕпчев ĕçĕсемпе кăсăкланма пуçланă. Шкулта «Çамрăк тĕпчевçĕ» кружок уçăлни ăна калама çук хавхалантарнă. Кружока çӳрекенсен тĕп тĕллевĕ – тăван тавралăхри микротопонимсене тĕпчесси.

– Кашни ялта хăйне евĕрлĕ ятпа палăракан вăрмансем, çырмасем пур. Манăн тăван Итакаччассинче, сăмахран, Турхан варĕ пур. Вăл ĕлĕкхи чăвашсен ырă-усал ячĕпе çыхăннă. Ку тăрăхри чăвашсен ăна Торханти тесе каланă. Çав вар патĕнче ĕлĕк чӳксем ирттернĕ. Ун пирки эпĕ асаттерен тата унăн аппăшĕнчен ыйтса пĕлтĕм. Вĕсем питĕ интереслĕ каласа параççĕ. Ку мана тата ытларах пĕлме, тĕпчеме хавхалантарать, – терĕ Инна хăпартланса. – Кружока çӳресе тĕпчев ĕçĕсем те çыратпăр. Вĕсемпе конкурссене хутшăнма та май пур.

Çамрăк тĕпчевçĕсенчен чи маттуррисенчен пĕри пулнă май пике çулсерен иртекен «Моя малая Родина: природа, культура, этнос» тĕпчев ĕçĕсен конкурсĕнче çиеĕч ăсĕпе палăрнă. Тăрăшулăхне кура – хаклавĕ. Инна республикăра 1-мĕш вырăна тивĕçсе Раççей шайĕнчи конкурса та хутшăннă. Унта та малти вырăнсенчен пĕрне йышăнма пултарнă маттурскер. Кăçал та Иннăна çак конкурсра тупăшма чĕннĕ. Вĕрентекенсемпе тантăшĕсем вăл çĕнтерессе иккĕленмеççĕ.



Ăс-тăнпа тавракурăма кунсерен аталантарма тăрăшмалла. Кунта вара кĕнеке, хаçат-журнал вулани пулăшать. Инна та çакна асра тытса тăтăшах шкулти тата ялти вулавăша çул тытать.

– Манăн юратнă хайлавсенчен пĕри – Нелли Петровская çырнă «Çил-тăманлă каç», – каласа панĕ вăл. – Çамрăксен ĕçĕ-хĕлне, ĕмĕчĕсене еплерех çутатни чуна чăнниех те тыткăнларĕ. Ăна эпĕ темиçе хут та вулама хатĕр. Вырăс çыравçисенчен вара Александр Куприн тата Иван Тургенев пултаруллăхне пуринчен ытларах кăмăллатăп.

Шкулта юлашки çул вĕренекенскер малалла ăçта пĕлӳ илме каяс ыйту канăç памасть. Кĕçех экзаменсем те çитеççĕ. Ку Иннăна питех те пăшăрхантарать. «ППЭне ăнăçлă тытасчĕ тесе çеç ĕмĕтленетĕп юлашки вăхăтра», – терĕ вăл. Мĕнле професси суйласа илесси пирки те хальлĕхе паллă мар-ха. Пултаруллăскере юрист, врач профессийĕсем килĕшеççĕ. «Вăхăт çитсен çак икĕ профессирен пĕрне суйласа илмех тивет, – терĕ вăл кăмăллăн. – Хальлĕхе вара экзаменсене çанă тавăрса хатĕрленес-ха».

Муркаш районĕ,
Ярапайкасси шкулĕ.

Тантăш 7
15 №, 2015, апрель, 9

# Мăнкун ырри

*Мăнкун – çуркуннехи чи пысăк та пĕлтерĕшлĕ уявсенчен пĕри. Ăна аслисем те, ачасем те чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Çак кун кашниех начаррине манса лайăххи çинчен çеç шухăшлать, ырă малашлăх пирки ĕмĕтленет.*

Мăнкунта мĕн авалтан тутлă апат-çимĕç, кукăль-çăмах пĕçернĕ, сăра вĕретнĕ, çăмарта сăрласа илемлетнĕ. Ачасем ир-ирех çăмарта пуçтарма тухнă. Кашни киле кĕрсе: «Христос чĕрĕлнĕ!» – тенĕ. Кил хуçисем: «Чăн чĕрĕлнĕ!» – тесе хуравланă май ачасен хутаçĕсене пылак кучченеç тата сăрласа илемлетнĕ Мăнкун çăмарти хунă. Ку йăла халĕ те хăш-пĕр ялта упранса юлнă.

Мăнкун çимĕçне ытларах чухне хĕрлĕ тĕспе сăрланă. Çак тĕс чĕрĕлĕх, савăнăç палли шутланать.

Уявра çăмарта сăрласси Мария Магдалинăпа çыхăннă. Иисус Христос чĕрĕлсе тăнă савăнăçлă хыпара вăл Тиберий императора пĕлтерме васканă. Ун патне парнесĕр килме юраман, çавăнпа та Мария хăйĕнпе çăмарта илнĕ. Ахальтен мар: вăл пурнăç, аталанăвăн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланнине пĕлтернĕ. Мария императора Иисус Христос чĕрĕлнине пĕлтерсен лешĕ кулса янă: «Кун пекки пулма пултараймасть! Санăн аллунти шурă çăмарта та хĕрлĕпе сăрланаймасть вĕт-ха!», – тенĕ вăл ĕненмесĕр. Çак сăмахсем хыççăн Мария аллинчи шурă çăмарта тӳрех хĕрлĕ тĕслĕ пулса тăнă.

Акă ăçтан пуçланнă Мăнкунта çăмарта сăрласси. Халĕ ăна хĕрлĕпе çеç мар, ытти тĕспе те илемлетеççĕ. Унсăр пуçне вак-тĕвекпе, йăлтăрккапа, шăрçапа çыпăçтарса та капăрлатаççĕ. Атьăр-ха эпир те уяв çимĕçне хамăра килĕшнĕ пек хитрелетер.

**1-мĕш меслет.** Ăвăспа (воск) эрешлени. Ирĕлтернĕ ăвăса йĕп е шăл тасаткăчне пуçса çăмартана хăвăра килĕшнĕ пек эрешлесе илемлетĕр. Ăвăс типсен çимĕçе сăрламалли шĕвеке хурăр. Сăрă типсен ăвăса хырса тасатăр. Ку меслетпе усă курса çăмарта çине уяв саламне, ята тата ыттине те çырма пулать.



**2-мĕш меслет.** Чĕнтĕрлĕ эреш.



Çăмартана кивĕ тюль татăкĕпе е чĕнтĕрлĕ салфеткăпа чĕркесе сăрламалли шĕвеке ярăр. Типсен пусмана çимĕçрен уйăрăр. Хăйне евĕрлĕ эрешпе витĕннĕ çимĕç уяв сĕтелне чăнах та илемлĕрех кăтартĕ.

**3-мĕш меслет.** Декупаж техники. Уяв



çимĕçне пĕр-пĕр ӳкерчĕкпе илемлетме килте те май пур. Малтан çăмарта пĕçерĕр. Хыççăн желатин çилĕмне хатĕрлĕр. Желатина шывпа хутăштарса ислентерĕр те вĕтĕ алапа ытлашши шĕвеке сăрăхтарăр. Юлнă желатина çулăм çине лартса пĕрчĕсем ирĕлсе пĕтиччен вĕрилентерĕр.

Илемлĕ, тĕрлĕ тĕслĕ ӳкерчĕклĕ салфетка илĕр. Пĕр сийне хăйпăтса уйăрăр та кăмăла кайнă ӳкерчĕке касса кăларăр. Ăна çăмарта çине хурса çилĕмпе (ӳкерчĕк варринчен пуçласа айккинелле) сĕрсе çирĕплетĕр.

**4-мĕш меслет.** Илемлĕх палитри – тĕрлĕ тĕслĕ çип. Уяв çимĕçне кăткăс эрешпе илемлетес тесен ăна тĕрлĕ тĕслĕ мулине çиппипе çавăрса çыхăр. Унтан пĕçерме лартăр. Çăмарта сивĕнсен çиппе касса илĕр.

**5-мĕш меслет.** Ача-пăча савăнăçĕ.



Пĕçернĕ çăмартаран тĕрлĕ чĕрчун та ăсталама пулать. Сăмахран, хаваслă чăх чĕппине. Çимĕçе çутă сарă тĕспе сăрлăр. Типнĕ вăхăтра желатин çилĕмĕ хатĕрлĕр. Çăмартана чĕпĕ сăнарне кĕртме тĕрлĕ тĕслĕ хутран унăн икĕ çунатне, сăмсине, кикирикне, урине, хӳрине тата ытти пая касса кăларăр. Куçĕсене фломастерпа ӳкерме пулать. Хатĕр пайсене çăмарта çине çилĕмпе типтерлĕн çыпăçтарăр.

**6-мĕш меслет.** Фольгапа капăрлататпăр.



Канцеляри лавккинче тĕрлĕ тĕслĕ фольга тата конфетти туянăр. Фольгана пĕр пек пайсене касса пайлăр. Кашни çăмартана фольгапа чĕркĕр те çиелтен конфетти çыпăçтарса капăрлатăр.

**7-мĕш меслет.** Хаваслă миньон.



Çăмартана паллă мультфильмри сăнара çавăрмашкăн питех те çăмăл. Кăвак тата сарă тĕслĕ сăрă кирлĕ пулать. Пĕçернĕ çимĕçе малтан сарă, унтан кăвак сăрра чиксе кăларăр. Сăрăсем типсен миньон «питне», тумне ӳкерĕр, куçĕсене çыпăçтарăр. Хаваслă та илемлĕ мультфильм сăнарĕ хатĕр.

## Сĕтел хатĕрлетпĕр

Мăнкун сĕтелĕ апат-çимĕçрен пуян та тулăх пулмалла. Лавккаран туяннă кучченеçсĕр пуçне хăш-пĕр çимĕçе килте янтăлама май пур. Сире тутлă кулич рецепчĕпе паллаштаратпăр.

Ăна валли 1,2-1,4 килограмм çăнăх, 6-7 апат кашăкĕ çăратнă сĕт, çур литр шыв, 60 грамм çĕпре, 4-5 çăмарта, 2 стакан сахăр, 200 грамм услам çу е маргарин, çур чей кашăкĕ чухлĕ тăвар, 1 хутаç ванилин, 1 стакан исĕм кирлĕ.

Савăтра шывпа çăратнă сĕте хутăштаратпăр. Тĕпретнĕ çĕпре, çăнăхăн пĕр пайне хушса лайăх пăтрататпăр. Вăл çăра хăйма евĕр пулмалла. Савăта таса, нӳрĕ алшăллипе хуплатпăр та ăшă çĕре лартатпăр.

Хутăш хăпарса икĕ хут пысăклансан сахăрпа лăканă çăмарта, çемçелнĕ услам çу, ванилин, исĕм, тăвар тата юлнă çăнăха ярса çемçе чуста çăратпăр. Хатĕр чустана каллех алшăллипе витетпĕр. Ăшă çĕре хурса 1 сехет е 1 сехет çурă тытатпăр. Хăпарнă чустана икĕ хут çăрса каялла антармалла.

Çу сĕрнĕ кулич формин çуррине е пĕрре виççĕмĕш пайне чустапа тултаратпăр. Алшăллипе витетпĕр. Хăпарнă чуста формăн виççĕ тăваттăмĕш пайне тултарсан 200 градус таран хĕртнĕ духовкăна асăрханса лартатпăр. 40-60 минут пĕçеретпĕр.

Сивĕннĕ куличе ахаль е шăккалат глазурьпе илемлететпĕр.

***Глазурь***

Глазурь хатĕрлеме 4 апат кашăкĕ сахăр, 1 çăмарта шурри, 1 чей кашăкĕ чухлĕ лимон сĕткенĕ кирлĕ.

Савăтра çăмарта шуррипе лимон сĕткенне пăтратмалла. Пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн (пĕрер кашăк) сахăр хушса кăпăкланиччен лăкамалла.

Глазурь хатĕр е хатĕр маррине пĕлме савăта силлесе пăхăр. Çимĕç чĕтренмест-тĕк – вăл усă курма юрăхлă. Е савăта тепĕр май çавăрса пăхăр. Глазурь юхса тухмарĕ пулсан вăл хатĕр.

Глазуре сивĕннĕ кулич çине çеç сĕрĕр.

## Парнелĕх – илемлĕ карçинкка

Мăнкунра çывăх çынсене, тăвансене сăрланă çăмарта, кулич, пылак çимĕç парнелесе савăнтарас йăла ĕлĕкрен пырать. Тутлă кучченеçсене вара хамăр алăпа ăсталанă карçинккана хурсан илемлĕ те хăйне евĕрлĕ парне пулĕ. Апла ĕçе пуçăнар.



Кивĕ журнал хуплашкинчен тăваткал касса кăлармалла. Пур енĕ те 30 сантиметр пултăр. Тăваткала 9 пĕр пек пая пайлăр та кĕтес енчи тăваткалĕсене касса илĕр. Варрине ан тĕкĕнĕр – вăл карçинкка тĕпĕ пулĕ. Ытти тăватă пая канцеляр çĕççипе тăрăхла май пĕр пек хăюсене касмалла. Хут вĕçне тĕкĕнмелле мар.





Хыççăн журнал хуплашкисенчен темиçе хăю касса кăларăр. Вĕсен сарлакăшĕ тăрăхла хăюсеннипе пĕр тан пулмалла. Хут йăрăмĕсене ӳкерчĕкре кăтартнă пек явса карçинкка ăсталăр. Вĕçĕсене тата карçинкка çаккине çилĕмпе çыпăçтарăр.

Хутлатнă (гофрированный) симĕс тĕслĕ хутран «курăк» ăсталăр. Ăна çинçе хăюсене касăр та алăра чăмăртаса кăштах лӳчĕркĕр. Карçинкка тĕпне хурăр. Илемлĕ те хăйне евĕрлĕ парне хатĕр!

Çывхарса килекен уяв ячĕпе саламлатпăр сире!

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Чĕрĕ туйăм кивелмест, сӳнмест...

**Ачалăхпа яшлăхра сăвă çырман çын сайра-тăр. Чунри савăнăç-пăшăрхану йĕркесемпе çаврасене сăрхăнса тухать. Çитĕнерехпе чылайăшĕ пăрахса ярать ку ĕçе. Чăн-чăн сăвăçсемшĕн вара поэзи пурнăç çулне çутатакан маяк пек пулса тăрать. Турă панă пултарулăх тымарланса тарăнланать, çеçке пек илемлĕн çурăлать. Поэт вулакансене чуна витерекен хайлавсем парнелет...**

Михаил Сениэль те ача чухнех сăвă шăрçаланă-тăр. Çулсем иртнĕçем те Çилçунат хавхалантарсах тăнă ăна. Калемĕ çăмăллăн тĕрленĕ шурă хут питне. «Ыр çын каять – ыр ят юлать», – тесе ахальтен каламан ваттисем. Поэт хыççăн мĕн юлать? Паллах, сăввисем. Михаил Павлович пирĕнтен уйрăлса кайнă пулин те, аллăмра унăн çĕнĕ кĕнеки. «Яшлăхри пĕр çемĕ» ятлăскер (редакторĕ – Ольга Иванова, ӳнерçи – Наталья Васильева) нумай пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче 1000 экземплярлă тиражпа кун çути курчĕ.

Аслă классенче ăс пухакан хĕрсемпе каччăсене валли хатĕрленĕ кăларăма Михаил Сениэлĕн тĕрлĕ çулсенче çырнă сăввисемпе «Яшлăхри пĕр çемĕ» поэми кĕнĕ. Сăвăсене виçĕ ушкăна уйăрнă: «Вальс çеç иртмест, иртмест шкул вальсĕ...», «Поэт юратура чарусăр, çирĕп – тĕнче пĕлменнине пĕлет...», «Пурнăçа Атăл пек эп куратăп...». Поэт яш-кĕрĕме палăртнă тĕллев патне çирĕппĕн те хастаррăн утма, тăрăшса вĕренме, туслăхпа юратăва упрама чĕнсе калать. Ырă шанăçпа хавас кăмăл вара пурнăç кăткăслăхĕсене парăнтарма пулăшĕç. Ахальтен мар кĕнекере ĕç, тăнăçлăх, тăванлăх кĕввисем çĕкленӳллĕ туйăмпа янăраççĕ. Пейзаж сăввисемпе юрату лирики те чĕрĕ, илĕртӳллĕ, хăйне евĕрлĕ сăнарсемпе пуян. Автор чăрсăрланма, шӳтлеме юратнине сисме пултаратпăр. Хĕрӳ туйăмсене те пытармасть вăл. Сăмахран:

Хӳхле, чĕремĕн вут-кăварĕ...
Савни, те йĕмĕм çĕтĕкрен:
«Эп – сан», – тесе сăмах памарĕ.
Туй пулаймарĕ çимĕкре.

Йĕм кантăри салтмарĕ маншăн.
Салтма-и, чуптуса курман.
Кам яшлăхра айван пулман-ши?
Эп пултăм çав тери айван.

*(Яшлăхри пĕр çемĕ)*



Мĕн-ха вăл – «яшлăхри пĕр çемĕ»? Чĕрĕ туйăм иккен. Вăл вăхăт иртнĕçемĕн те кивелмест, сӳнмест. «Юрату çеммийĕ пулчĕ çемĕ, савăнпа çĕнетрĕ те чуна», – тет автор. Эппин, кашни вулакан чĕрине вырнаçтăр çав çемĕ. Михаил Сениэль кĕнекинче яшсем те, хĕрсем те хăйсене хумхантаракан ыйтусене хускатнă сăвăсемпе паллашма пултараççĕ. Автор çамрăксен кăмăлне ăнланни, вĕсене мĕн кирлине пĕлни уççăнах сисĕнет. Хаклă тантăшăмăрсем, ку кăларăм – шăпах сире валли!

**Михаил СЕНИЭЛЬ**

### Парта айĕнче çуралнă сăвă

Эй, парта айĕнче çуралнă сăввăм,
ан кăшкăрсам, ан илттĕр пĕр никам.
Илтсессĕн юлаймастăн сывă,
кĕрсе ӳкетĕн хурлăха.

Сана чăр-чар! чĕрсе лап-лап! таптаççĕ.
Куратăн-и, мĕн чухлĕ сан тăшман?
Малта – Цыфаркин, икс тупаканçă
кирек епле таса япаларан.

Санра та шырĕ икспа игрекне, зетне.
Мана лектерĕ уравнени капкăнне,
лектерĕ те кăларĕ тинкене.
Ах, пĕтрĕмĕр! Ах, çитрĕ, хирĕçет...

Ытти тăшман вăл пирĕн – пĕтĕм класс.
Кунта пире ытла та шăрăх, тăвăр.
Ан кăшкăрсам, ан хирĕç, ан калаç,
о, парта айĕнче çуралнă паттăр сăввăм!

*1956*

### Юрă

Хĕрачасем юрлаççĕ юрă
савни инçе пулни çинчен.
Савнийĕсем çумрах-мĕн, курăр,
сĕнксе лараççĕ темĕнччен.

Ӳпкелесе кусран пăхмаççĕ,
шанаççĕ хăйсене вĕсем.
Хĕрачисем савсах савмаççĕ,
çакна туймаççĕ каччисем.

Пĕри те юрлама пĕлмест-ши,
элле пĕлсен те юрламасть?
Ялан çӳреççĕ кӳлешесшĕн
каç-каç тухсассăн урама.

Тен, çавăнпа юрлаççĕ юрă
хĕрачасем ялан пĕччен
ĕмĕтсенчи таçти йăлт урăх,
хастар, чипер ача çинчен.

*1957*

* * *

Кантăкран курăнать анлă Атăл,
çырантан пуçланать сĕм вăрман.
Пурнăçа Атăл пек эп куратăп,
анлă пултăрччĕ, вăрăм вăл ман.
Вăрманта аташма та час пулĕ,
çул тупасчĕ, утасчĕ инçе.
Çитĕ савнăç е хуплĕ куççулĕ –
пурпĕр савăк-çке маншăн тĕнче...

*1957*

КОНКУРС!

# Ĕмĕтленĕр, çырăр, хутшăнăр!

Раççейри Литература çулталăкне тата Пушкин поэзийĕн уявне халалласа Чулхула облаçĕн Культура министерстви 2015 çулхи çĕртме уйăхĕн 5–7-мĕшĕсенче «И пробуждается поэзия во мне» Çамрăк литераторсен слетне ирттересси пирки хыпарлать. Унăн тĕллевĕ – паянхи çамрăк çыравçăсен литературăри пултарулăхне уçасси, яш-кĕрĕме хавхалантарасси. Слета хутшăнакансене (18–35 çулсенчи яшсемпе хĕрсем) виçĕ ушкăнра палăртаççĕ: поэзи, проза тата автор юрри.

Тĕплулу вырăнĕ – Аслă Болдино салипе Лучинник рашчи хушшинче вырнаçнă кӳлĕ сывăхĕнчи илемлĕ лапам. Шăпах кунта палаткăсен лагерьне йĕркелĕç. Слет программинче: çамрăк литераторсен конкурсĕ, кăвайт умĕнчи каçсем, Болдинăра иртекен Пушкин поэзийĕн уявне хутшăнни, паллă авторсемпе Чулхулари аслă шкул преподавателĕсен мастер-класĕсемпе лекцийĕсем.

Мероприятие хутшăнакансен йышĕнче пулас тесессĕн Фейсбукри (**https://www.facebook.com/groups/773299222745224/**) е «ВКонтакте» сайтри (**https://www.vk.com/event86635169**) слет ушкăнне кĕмелле те çу уйăхĕн 1-мĕшĕччен хăвăрăн виçĕ хайлавăра (сăвă, проза е аккордсемлĕ юрă тексчĕ) унта вырнаçтармалла. Тĕплулу эксперчĕсем (Чулхулари тата Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчи поэтсем, прозаиксем, бардсем) пултаруллă та хастар 100 çамрăка суйласа илĕç. Чи маттур хĕрсемпе каччăсем Болдинăри конкурсра хăйсене кăтартма пултарĕç, çĕнтерӳçĕсем вара гала-концерта хутшăнайĕç, дипломсемпе хаклă парнесене тивĕçĕç. Чи лайăх произведенисем «Нижний Новгород» литературăпа ӳнер журналĕнче пичетленĕç.

Çамрăк прозаиксем, поэтсем тата бардсем, вăрах шухăшламасăр хайлавăрсене вулакан-итлекен умне кăларăр. Халĕ шăпах меллĕ те вăхăтлă самант. Тен, телей кайăкĕ шăпах сире суйлĕ. Пушкин тăрăхне çитсе курни, çавăнти сывлăшпа сывлани, хăвăр пекех çыракан çынсемпе тĕл пулса калаçни мĕне тăрать!.. Чи кирли – хăвăр вăя шанни. Ĕмĕтленĕр, çырăр, хутшăнăр! Вара ăнăçу килетех.



Страницăна Ольга АВСТРИЙСКАЯ хатĕрленĕ.

# Сăвăпа чĕрем юрлать



## Çĕрпӳ районĕнчи Тавăшкасси шкулĕнче 4-мĕш класра вĕренекенсен пултарулăхĕ

### Çуркунне

Акă çитрĕ çуркунне,
Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать.
Хурама вăраннипе
Папкисене кăларать.

### Вĕрентекен

Вĕрентекен – иккĕмĕш анне,
Турă хăй пире панă парне.
Вĕрентет вăл тăрăшса,
Чĕререн пире савса.

*Полина ИВАНОВА.*

### Чĕкеç

Чĕкеç ĕçлет кунĕн-çĕрĕн,
Тăм та çĕклет пĕверен.
Ик вăйлă çунаттипе
Вăл вĕçет халь кунĕпе.

*Анастасия ИГНАТЬЕВА.*



**© Даша СЕРГЕЕВА** (Çĕрпӳ районĕ, Чурачăкри ача сачĕ) *ӳкерчĕкĕ.*

### Ача

Ача тухрĕ урама
Мечĕкпеле выляма.
Сиккипеле вăл чупать,
Мечĕкне хыт хăвалать.

### Йăмăк

Манăн килте йăмăк пур,
Халь вăл пĕчĕк те маттур.
Пĕрмай калать хăй мана:
– Айта пĕрле выляма!

*Виктория КРЫЛОВА.*



**© Кристина ВАСИЛЬЕВА** (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) *ӳкерчĕкĕ.*

### Пичче

Манăн килте пичче пур,
Пит хăюллă та маттур.
Мана тăтăш пулăшать,
Лайăх вĕренме хушать.

*Мария ПЕТРОВА.*

### Пакша

Хыр тăрринче вăрманта
Куртăм эпĕ пакшана.
Йăкăлт-якăлт сиккелет,
Вăрăм хӳрине силлет.
Йывăç çинчен йывăç çине
Сикет пакша тăрăшса.
Тăрантарать хырăмне
Йĕкел, кăмпа шыраса.

*Леонид ИВАНОВ.*

### Кашкăр

Выçă кашкăр вăрманта
Çӳрет пĕччен уласа.
Мулкача та вăл курмасть,
Шăшине те тытаймасть.

*Макар ИВАНОВ.*

### Мулкач

Утрăм эпĕ шкулалла,
Куртăм шиклĕ мулкача.
Чупрĕ вăл хăранипе
Тăвалла сиккипеле.

*Алеша ВАСИЛЬЕВ.*



**© Кристина ВАСИЛЬЕВА** (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) *ӳкерчĕкĕ.*

### Шапа

Кайрăм эп пулла кăна,
Куртăм вĕçкĕн шапана.
Шапа ларать кваклатса,
Пĕтĕм пулла хăратса.

*Артем АРСЕНТЬЕВ.*

### Кушак

Кушак килте пурăнать,
Хăйма çиме юратать.
Çывăрать вăл кунсерен,
Шăши тытать каçсерен.

*Катя ТИНЯКОВА.*



**© Катя ВАСИЛЬЕВА** (Вăрмар районĕ, Энĕшпуç) *ӳкерчĕкĕ.*

### Маттуркка

Манăн килте кушак пур.
Вăл илемлĕ, пит маттур.
Сĕтпе хăйма юратать,
Пулă шăммине çуллать.
Кравать çинче вăл вылять,
Физзарядка та тăвать.
Тултан кĕнĕ-кĕменех
Сĕт патне вăл чупатех.
Е тупать пĕр-пĕр çăмха,
Выляма пуçлать унпа.

*Таня МИХАЙЛОВА.*

### Павăл

Ăслă Павăл маттурскер,
Хăй вара вăл пĕчĕкскер.
Шкулта лайăх вĕренет,
«Пиллĕк» паллă çеç илет.

*Леня ИВАНОВ.*

## Елчĕк районĕнчи Таяпа Энтри шкулĕнче вĕренекенсен пултарулăхĕ

### Паттăр салтак

Акă пĕтрĕ аслă вăрçă!
Таврăннă салтак яла.
Вăрçăра вĕсем юн тăкнă,
Хураллană çĕршыва.

Тăвансем те унта пулнă.
Паттăр çапăçнă чунтан,
Çĕр-аннемĕре сыхланă –
Нихăçан пуçне усман.

*Вадим ВОРОБЬЕВ,*
*6 класс.*

### Асаттепе мухтанатпăр

Çав асаплă вăрçăра
Ман асатте пулнă,
Ирсĕр, путсĕр тăшмана
Пинĕпе тĕп тунă.

Хуласемпе ялсене
Тăшманран тасатнă.
Паттăр кĕрешекене
Медальпе чысланă.

Шадриков – ман асатте –
Берлинта та пулнă,
Рейхстаг çинче хăй ятне,
Хушаматне çырнă.

Эпир, ун мăнукĕсем,
Питĕ мухтанатпăр,
Вăл килнишĕн çĕнтерсе
Чунтан савăнатпăр.

*Татьяна ШАДРИКОВА,*
*5 класс.*

### Сывлăх пултăр!

Юратап асаттене,
Унăн шурă сухалне.
Çапăçнă вăл вăрçăра,
Хисеплеççĕ паттăра.

Унăн кăкăрĕ çинче
Орденсем те медальсем.
– Сывлăх пултăр, асатте!
Тăнăç пурнăç тĕнчере!

Пире вăрçă кирлĕ мар,
Эпир тăлăх ӳсер мар.
Атте-аннеллĕ пулар,
Савăнса çеç пурăнар!

*Анжела МУЛЛИНА,*
*7 класс.*

### Çĕнтерӳ саламĕ

Янкăр ир вĕçсе çитрĕ хыпар:
Фашистсен вут-кăварлă «саламĕ».
Ăш-чикне хыпса илчĕ пушар,
Мăшăру кĕç вăрçа сан ăсанчĕ.

Ĕнтĕ çук çав сăлтав савăнма,
Çухату чĕрӳне хыт амантнă.
Вăхăт мар ачуна йăпатма,
Шăл çыртса малалла тапаланнă.

Т(ă)ват çултан çитрĕ савăк хыпар:
Çĕнтерӳ! Çĕнтерӳçĕ саламĕ!
Тăшмана хăйне пултăр начар,
Салютсен вут-кăварлă хĕлхемĕ!

*Яна ГЕРАСИМОВА,*
*6 класс.*

### Тăнăç пурнăçшăн

Çитмĕл çул тултарчĕ
Çĕнтерӳ уявĕ.
Халăх паттăр пулчĕ,
Пур унăн мухтавĕ.

Çĕршыва çутатрĕ
Çĕнтерӳ салючĕ.
Çуркунне те çитрĕ –
Çĕнтерӳ парачĕ.

Вăрçă тек ан пултăр
Çĕр çинче нихçан!
Мирлĕ пурнăç пултăр
Пирĕнпе ялан!

*Яна ЧУМАНОВА,*
*5 класс.*

### Вăрçă хирĕнче

Мĕнле хăрушă пулнă вăрçă!
Кĕлленнĕ ял-хула.
Ним шелсĕр, айăпсăр хаярçă
Персе вĕлернĕ хаярла.

Вĕл-вĕл вĕçеççĕ пульăсем,
Вилеççĕ маттур салтаксем.
Ак лекрĕ пуля çамрăка,
Ĕлкĕрчĕ сирпĕтме танка.

Хăрушă вăрçă хирĕнче
Вăл хучĕ паттăрла пуçне.
Шап-шурă кантăк умĕнче
Амăш кĕтет хăй ывăлне.

*Елена ВОРОБЬЕВА,*
*6 класс.*

### Амăшĕн чĕри

Амăш чĕри ыратать:
Ывăл салтака каять.
Тур пулăштăрах ăна
Чипер, сывă таврăнма.

Хăратать-çке çут тĕнче –
Вăл хупланнă тĕтĕмпе,
Тапăлать-çке ăнсăртран
Этем чунĕ пульăран.

*Снежана МУЛЛИНА,*
*7 класс.*



**© Инесса КУЗНЕЦОВА** (Сĕнтĕрвăрри районĕ, Хуракасси) *ӳкерчĕкĕ.*

### Манас çук нихçан

Хаяр вăрçă хирĕнче
Выртса юлнă салтаксем.
Тăван çĕршыв çарĕнче
Юн юхтарнă çамрăксем.

Йăлт тĕп тунă фашистсем,
Пурпĕрех пирĕн çĕнтернĕ.
Ĕмĕр манми паттăрсем
Пире пурнăç парнеленĕ.

Савăнаймĕ тек тăшман –
Ларнă юнĕ кĕвĕлсе.
Манас çук эпир нихçан –
Пуçне хунă паттăрсем.

*Снежана МУЛЛИНА,*
*7 класс.*

### Ма–ши?

Хаяр пит пулнă вăрçă тĕнчере.
Миçе пин çын çул тытнă унталла?
Пĕр амăшĕ калавă ывăлне:
– Эс паттăр пул, ан чак хыçалалла!

Ак вăрçă хирĕнче вăл аса илчĕ
Пилленĕ тăван амăш сăмахне.
Çапла вăл паттăр çапăçрĕ, çĕнтерчĕ.
Пĕр шелсĕр хучĕ çамрăк хăй пуçне.

Кама-ши ырă пулчĕ вăрçăран?
Илесшĕн пулнă тыткăна пире.
Хамăр çĕре, тăшман, сана паман!
Ма пулнă-ши çак вăрçă тĕнчере?

*Кристина ИВАНОВА,*
*8 класс.*

## Пĕррехинче

*Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем*

# Эпĕ хаваслă хĕрача



© Юля КУЗЬМИНА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) *ÿкерчĕкĕ.*

Иккĕмĕш сыпăкри пиччепе иксĕмĕре аслă аппа тĕлĕнмелле лайăх пăхать. Вăхăтра апатлантарать, çывăрма вырттарать. Пирĕн çине шăна таврăш вĕçсе ларсан та ăна самантрах хÿтерет.

Пĕр ирхине вăрансан, тем, кăмăллă аппана асăрхаймарăм. Яланхилле вăл пире пырса ыталамарĕ. Хайхискер ăçта та пулин пытаннă тесе кăмака хыçне те, сĕтел айне те пăхрăмăр. Кăлăхах. Юратнă çыннăмăр ниçта та çук.

– Аппу кăçал шкул вĕренсе пĕтерчĕ. Халĕ пĕлĕвне малалла ÿстермешкĕн хуланалла çул тытĕ, – ăнлантарчĕ анне пире паян.

Çакăн хыççăн пире вăталăх аппа пăхма пуçларĕ. Кăшт çиллесрех иккен вăл. Тăтăш мăкăртатать. Пÿртри пĕр япалана та тыттарасшăн мар. Тирпейлĕхе кăмăллаканскер ялан нÿрĕ çĕтĕкпе тусана сăтăрать. Пÿлĕмре чупма юрамасть, урай хăми чĕриклетнĕрен вăл канăçсăрланать иккен. Мĕншĕн? Çакна вара никам та татăклăн калаймĕ.

– Шăпăрт ларăр, пÿртре шăна вĕçни çеç илтĕнтĕр, – текелет час-часах аллине кĕнеке тытнă май.

Унран шикленетпĕр. Çавăнпа хамăра йĕркеллĕ тытма тăрăшатпăр. Кунĕпе пĕр вырăнта пуканесемпе вылятпăр.

Вырсарникун пирĕн пата аппан юлташĕсем килчĕç те тытăнчĕç пирĕнпе алхасма! Вĕсенчен пĕри мана, тупата, кăтăкласа вĕлеретчĕ ахăртнех. Унран тарса шифоньера кĕрсе тартăм çеç, инкеке çаклантăм. Ассăн сывланă чухне сăмсана эрешмен кĕрсе кайрĕ те тытăнтăм апчхулатма. Ура çине тăраймастăп вĕт!

Сехĕрленсе ÿкнĕ пикесем мана самантрах унтан туртса кăларчĕç, диван çине лартрĕç.

– Ачана мĕн турĕ? – терĕ аппа юлташĕсем çинелле пăхса.

– Нимĕн те, – пулчĕ кĕске хурав.

Тепре апчхулатрăм та сăмсаран эрешмен тухса та ÿкрĕ. Вăйран кайрăм, кăштах паппа тăвас тесе сак çине тĕршĕнтĕм. Çук, çывăрас килмест иккен манăн. Канас çеç килет ыррăн. Халĕ кăштах маччана пăхса выртатăп. Çакăншăн никам та ятламĕ.

Ак япала! Куçа тем амакĕ кĕрсе кайрĕ. Ыраттарать. Ялт сиксе тăтăм хăранипе.

– Аппа-а-а! Паян вилетĕп пула-а-ас! – тесе ĕсĕклесех макăрма тытăнтăм.

Аслисем мана сырса илчĕç те диван çине выртхарчĕç. Иккĕн тан куçри çÿппе шырама тытăнчĕç. Пĕр чăрăнми шăпăртатать куççуль. Çук, нихăшĕ те ыратăва лăплантарма пултараймарĕ. Тупаймарĕç çÿп таврашне...

– Тата лайăхрах макăр-ха, тен, куççульпе юхса анĕ купăнманскер, – терĕ аппа юнашар вырнаçса.

Каларĕ те вара, кунран ытла мĕнле ĕсĕклеме хал çитерĕп-ха? Чим? Ĕнер эпĕ алăк хушшине алла хĕстертĕм. Ниçта кайса кĕрейми тĕпĕртетрĕм ыратнăран. Анчах найкăшмарăм. Айăпли хамах-çке.

Çав пулăма аса илтĕм те тытăнтăм хÿхлеме! Урайĕнче йăваланса ĕсĕклетĕп.

– Ах, ыратать! – терĕм сылтăм алла силлесе.

Куççуль тухми пулчĕ. Вара пит-куçа çанă вĕçĕпе шăлса типĕтрĕм те кăмака çумне кайса тăтăм.

– Халĕ нимĕн те канăçсăрлантармасть-и? – йăтса илчĕ мана аппа.

– Çук, пуç çеç кăштах шавлать, – терĕм йăл! кулса.

Куçран çÿпĕ тухса ÿкнĕрен çав тери хĕпĕртерĕм. Кĕçех тĕкĕр умне чупса пырса хама сăнама пикентĕм. Турăçăм! Ытла та сăнсăр иккен эпĕ. Куçсем хĕп-хĕрлĕ, пахчари палан пек.

– Илемсĕр пулас мар тесен макăрмалла мар, – терĕм хама хам.

...Савăтри шывпа выляса ларатăп. Ах, епле аван! Кунашкал айкашманни чылай пулать те никам кансĕрлемен чухне, тен, витрене кĕрсех лармалла? Уншăн мĕн пулать вара?

Салтăнма пуçларăм. Нуские хывнă чухне сулăнса кайрăм. Ÿкес марччĕ тесе сĕтел çинчи чечек çулçинчен ярса тытрăм. Эх, усси пулмарĕ. Тăсăлса выртрăм урайне, çеçке савăчĕпе пĕрле. Куçа уçаймастăп. Унта тăпра кĕрсе тулнă.

Çине тăрса пите çума тытăнтăм. Куçăмри тасамарлăха хăвăртрах кăларса пĕтерес тетĕп-çке. Тăрмашсан-тăрмашсан ĕç ăнчĕ темелле. Умри тĕтре сирĕлчĕ, лайăх куракан пултăм.

Вырсарникун иккĕмĕш сыпăкри пиччене килсе ячĕç. Унран аякранах тарса çÿреме тытăнтăм. Машинипе ăнсăртран куçран лектерсен? Каллех куçăмран куççуль юхса çÿретĕр-и?

Ĕнтĕ куçшăн хăракан пултăм. Тепĕр чух çÿпĕ тавраш кĕрсе ан лартăр тесе куçа хупса ларатăп. Ăна уçма та хăратăп. Çапла куçа хупса ларнă чухнех тутлă та тăрăн ыйха путни те пĕрре мар пулчĕ. Мĕнле лайăх! Çапах та... Эпĕ хаваслă хĕрача!

# Ĕçлекен çеç ытлă-çитлĕ пурăнĕ

Тĕлĕнмелле ырă çанталăк! Ĕнер кăна çил-тăманччĕ, паян пÿрт тăрринчен тумла юхать.

Çакнашкал вăхăтра пÿртре епле пăчăхса ларăн? Çитменнине анне ирех пĕр кăмака кукăль пĕçерсе кăларчĕ те килте çав тери ăшă.

Чим-ха, урама тухиччен тин çеç пиçсе тухнăскере altivсе пăхам-ха. Кайран хырăм выçсан кăна çини аванах мар пек.

Хавас кăмăлпа тĕпеле иртрĕм. Тамаша! Тенкел çинчи витререн Мăрлуш шыв ĕçет. Çăварĕ типнĕ-ши вара?

– Прис! Мĕн хăтланатăн! – кăшкăрса пăрахрăм хайхискере.

Мăр-мăр вăшт çеç тарса çухалчĕ.

– Хă, тупăннă паттăр! Урама тух, унта мĕн чухлĕ тумла шывĕ! – терĕм çаплипех лăпланаймасăр.

Кур-ха, тепĕр кушак сĕтел çинчи кукăльсем çинче паппа тăвать. Юрать анне вĕсене ал шăллипе витсе хăварнă. Ăшша юратакан Сарпи кăмака çинче çывăрнăн туять-ши вара? Çухалса каймарăм, мечĕкпе петĕм. Тĕлĕкпе киленекен кушак самантрах тарса çухалчĕ. Инкеке – тăватă кукăль шыв витрине кĕрсе ÿкрĕ те, сехре хăпса тухрĕ. Шикленнипе шифоньер хыçне пытантăм.

Путсĕр кушаксене тахăшĕ тупса килнĕ урамран. Вĕсене пула шар курмалла. Çакăн пек мăр-мăрсем пире кирлех-ши вара? Хамăр Муркках лайăхчĕ. Хĕлле кĕлетрен, сарайĕнчен тухма пĕлместчĕ. Çуркунне шăнкăрч йăви çумĕнчен каймастчĕ. Çулла вĕçсе иртекен çерçисем çине тĕмсĕлсе тинкеретчĕ. Сĕтел çинче пĕр чашăк какай ларсан та унта нихăçан та хăпарнине курман.

Чим, шыври кукăльсем мĕн пулчĕçши? Савăт патне чупса пытăм. Пĕрне кăлартăм, теприне... Виççĕмĕшĕ еннелле алла тăсрăм та... исленсе кайнăскер йăлтах саланчĕ.



© Юля КУЗЬМИНА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) *ÿкерчĕкĕ.*

– Сыснасем валли апат пĕçертĕн-им? – терĕ такам хулпуççинчен тытса.

Кÿршĕ хĕрарăмĕпе анне! Çухалса кайрăм, нимĕн те чĕнеймерĕм.

Нина аппа шыври кукăль исленчĕкĕсене тытқаласа:

– Ачам, эсĕ мĕн-ма çав тери шухă? Çимеллипе кам çапла хăтланать? Сăтăр тăвакан эсĕ, аннÿне хисеплеме пĕлместĕн. Хамăн хĕрĕм çапла хăтлансан-и? Эпĕ ăна-и, эпĕ ăна-и?! – терĕ хайхискер ниçта кайса кĕреймесĕр.

Сăмахĕсем чĕрене ларчĕç.

– Манăн кунта пĕр айăпăм та çук. Путсĕр кушаксене пула йăлтах инкек сиксе тухрĕ. Чим, мĕн-ма эсир пирĕн аннене кукăль пĕçерттеретĕр? Хăвăрăн кăмака çук-им? Аннен вăхăчĕ ахаль те сахал. Тата сирĕншĕн ĕçлемелле, – терĕм ăна хирĕç.

– Ара, виçĕ кун хăнара пултăм. Яла тин çитрĕм акă, – тÿрре тухма хăтланчĕ хайхискер.

– Мĕншĕн суятăр? Ĕнер сире кăнтăрла лавкка умĕнче куртăм. Пы-ы-ысăк хутаçпаччĕ эсир.

Хĕрелсе кайрĕ кÿршĕ. Ман çине вара çисе ярасла пăхрĕ, анчах урăх нимĕн те чĕнмерĕ. Сĕтел çинчен виçĕ кукăль илсе тухса кайрĕ.

– Çынна мĕншĕ кÿрентеретĕн? – терĕ анне сасартăках.

– Кам? Эпĕ-и? Вăл хăй пирĕнтен кулать. Нина аппан уçăлса çÿремелле урамра, санăн вара ăна валли тар кăларса кукăль пĕçермелле. Çитменнине вăл ĕçе те каймасть, вăхăчĕ те тем чухлех ахăртнех. Эсĕ авă фермăран таврăнсан та ларса канаймастăн, тепĕр чухне чăлха çыхнă чухне те çаплах тĕлĕретĕн. Аллунти йĕпсем те урайне ÿкеççĕ. Сана мĕн тери йывăррине мĕншĕн ăнланмасть вăл? – терĕм тарăхса.

Тепĕр кунне урамра Нина аппана куртăм. Валя инкесем патĕнчен çăкăр илсе каçать. Каллех çынна пĕçерсе пама тархасланă ĕнтĕ. Тĕлĕнетĕп кÿршĕрен: çăкăр-кукăль пĕçермест, выльăх патне сарайне тухасть – кунне мĕн туса ирттерет-ши?

Пусăрăнчăк кăмăлпа картише кĕтĕм те карта çумне тĕршĕнтĕм. Кăвакалсене хĕрхеннĕрен ассăн сывларăм. Ара, Нина аппана аш кукăлĕ çитерес тесе анне икĕ нарт-нарта пусрĕ. Халĕ ыттисем кулянаççĕ ахăртнех тусĕсемшĕн. Кăмăлĕсене çемçетес тесе мĕн сапса парам-ши савăта: тулă е урпа?

Пĕчĕк витре илсе кĕлетелле васкарăм.

– Урăх Нина аппашăн кăвакалсене кÿрентерме памастăпах! Ахаль те сахалланса юлчĕç. Тутлă кукăль çиес тесен усратăр хăй Нина аппа хур-кăвакал. Урам тăрăх уçăлса çÿренине кăна хырăм тăранманнине вăл çак тарана çитсе те пĕлмест-им? – терĕм кĕлет алăкне уснă май.

Нарт-нартсем сарă тулă пĕрчисене ăмăртмалла пуçтараççĕ. Эпĕ вара вĕсем епле апатланнине савăнса пăхса тăратăп.

Килес çул сысна та виççĕ усрасшăнха анне, ун чухне каллех Нина аппа пирĕн еннелле сукмак такăрлатать-ши? Э, çук. Ун чухне хамах ĕçлекен çын çеç ытлă-çитлĕ те, тутă пурăнма пултарнине ăнлантарса парăп. Тĕслĕхпе çирĕплетме те пултарăп. Унăн куçĕ умĕнче çатмара ăшаланă сысна какайне кашăкпа ăса-ăса тутлăн çеç çисе ларма пултаратăп...

Антип НИКОЛАЕВ

# ПАТТӐРСЕН ҪЕМЙИ

(Малалли. Пуҫламӑшӗ иртнӗ номерте.)

## Иван АЛЕКСЕЕВ



Вӑл вӑрҫӑн пӗрремӗш кунӗнчех вилнӗ. 1941 ҫулхи кӗркунне унӑн Совет Ҫарӗнчен киле тавранмалла пулнӑ.

Иван Житомирти авиацин кӗҫӗн специалисчӗсен шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн чи лайӑх моторист шутланнӑ, полкри летчиксем ӑна пурте хисепленӗ.

### Листовка каласа пани

Пирӗн умра алӑпа ҫырнӑ листовка. Ӑна авиацин 66-мӗш штурмовой полкӗн 2-мӗш авиаэскадрилйинчи пуҫламӑш комсомол организацийӗ кӑларнӑ. Унта И-15 самолет моторисчӗ Иван Алексеев сержант ҫинчен каласа кӑтартнӑ.

Саралса кайнӑ хут листи ҫинче чи ҫӳлте «Ҫӗршыва – пӗтӗм вӑя» тесе ҫырнӑ, ун айӗнче: «Самолет моторисчӗ Иван Алексеев» текст.

«Алексеев комсомолец ҫамрӑк воинсене ырӑ тӗслӗх кӑтартать. Ӑна ҫавӑн пек пулма ҫӗршыв умӗнчи пысӑк тивӗҫ хушать.

Самолета вӗҫеве хатӗрленӗ чухне кашни секундшӑн кӗрешмелле, ӗҫ пахалӑхӗшӗн тӑрӑшмалла – ку комсомолецӑн пӗрремӗш тивӗҫӗ. Иван Алексеев вӑйне хӗрхенмест, хӑйӗн тӗллевне яланах пурнӑҫлать. Хастар комсомолец техникӑна аван пӗлет, малта пыракансен опытне вӗренет, тӗрлӗ операци тунӑ чух чи лайӑх меслетсем шырать...»

Малалла Алексеев самолет вӗҫеве мӗнле хатӗрлени ҫинчен тӗплӗн ҫырнӑ. Листовка вӗҫӗнче командовани унӑн тӑванӗсем патне тав туса ҫыру яни ҫинчен асӑннӑ.

– Ҫапла, астӑватӑп, астӑватӑп ку ҫырӑва, – ассӑн сывларӗ Татьяна Николаевна. – Ҫыру ҫинчен кӳршӗсем пӗлнӗ те пирӗн пата пуҫтарӑнчӗҫ. Ӑна Алексей Илларионович вуласа пачӗ.

Ҫырура ҫапла ҫырнӑ:

«Хисеплӗ Татьяна Николаевнӑпа Алексей Илларионович! Хавасланса сире ҫакна пӗлтерес терӗмӗр: сирӗн ывӑл Иван Хӗрлӗ Ҫар воинӗн чысне ҫӳлте тытать. Ҫарпа политика вӗреннӗвӗнче ырӑ тӗслӗх кӑтартнӑшӑн командовани ӑна темиҫе хутчен те тав турӗ. Командир тата парти, комсомол организацийӗсем подразделенин пӗтӗм составне унран вӗренсе пыма сӗнеҫҫӗ. Сирӗн ывӑлӑр малашне те Тӑван ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫе шанчӑклӑн пурнӑҫласа пырӗ тесе шанатпӑр...»

Паллах, ырӑ хыпар пурне те савӑнтарнӑ. Ахальтен мар Алексей Илларионович ларма-тӑма та вырӑн тупайман:

– Маттур, маттур, – тенӗ вӑл кулкаласа.

Татьяна Николаевна савӑнӑҫ куҫҫульне шӑлнӑ:

«Ывӑлӑм, эсӗ яланах телейлӗ пул», – тесе пӑшӑлтатнӑ.

...Ун чухне садсем ешернӗ, шап-шур чечеклӗ чие турачӗсем чӳречерен пӑхнӑ, тавралӑ ырӑ шӑршӑ сарнӑ. Вӗсем те Ивана савӑнӑҫлӑн кӗтнӗ пек туйӑннӑ. Паянылан вӑл киле ҫитмелле. Ҫав вӑхӑтра урнӑ Гитлер хӑйӗн ҫарӗсене пирӗн ҫӗршыв чиккисем патне куҫарса пыни ҫинчен, ҫӗршыва вӑрҫӑпа килсе кӗресси ҫинчен никам та шутламан.

### Вӑрҫӑн пӗрремӗш кунӗ

1941 ҫулхи июнӗн 21-мӗшӗнчи шӑматкун каҫӗ. Тӳпене ҫап-ҫутӑ ҫӑлтӑрсем тапса тухнӑ. Кунӗпе вӗренӳре пулнӑ авиаторсем канма выртнӑ. Ниҫта та пӗр сас-чӗвӗ илтӗнмест, тӗлӗнмелле шӑплӑх тӑрать.

Иван ҫав каҫхине чылайччен ҫывӑрса каяйман. Чӑнах та, кун пек лӑпкӑ каҫсенче кирек кама та ӗмӗтсем тыткӑна илеҫҫӗ.

Ыран – вырсарникун. Юлташӗсемпе футболла вылясси ҫинчен, ялти тӑванӗсем патне, Хӗрлӗ Ҫарта службӑра тӑракан Михаил, Егор тата Фрол патне ҫырусем ҫырмалли ҫинчен шутланӑ вӑл. Каҫхине вара, тен, ҫывӑхри ялти хӗрсем юрланине итлеме тухӗ. Чӑваш каччи Украина юррисене питӗ кӑмӑлланӑ.

Ҫавӑн пек шухӑшсемпе Иван сисмесӗрех тӗлӗрсе кайнӑ. Мӗн чухлӗ ҫывӑрнӑ вӑл, ӑна пӗлме ҫук. Ҫуллахи ҫӗр кӗске ҫав, хӗвелтухӑҫ шупкалма та пуҫланӑ.

– Сасартӑк хӑлхана ҫурас пек темле сасӑ илтӗнсе кайрӗ, – каласа парать Георгий Антонов. – Иван кравать ҫинчен сиксе тӑнине асӑрхарӑм. Ҫав самантра взрыв казармӑн хулӑн стенисене кисретрӗ. Взрывсем пӗрин хыҫҫӑн тепри илтӗнеҫҫӗ. Тӑшман самолечӗсем авиаторсен казарми ҫине бомбӑсем тӑкаҫҫӗ.

Самантлӑха Иван нимӗн те ӑнланса илеймен-ха. Вӑрҫӑ-ши? Унӑн иккӗленӗвне татса, эскадрилйӑри дежурнӑй кӑшкӑрса янӑ:

– Подъем! В ружье!..

Эскадрилья адъютанчӗ нимӗҫ ҫарӗсем пирӗн ҫӗршыв чиккине сӗмсӗррӗн пӑсни, тӑшман Прут шывӗ урлӑ каҫма тытӑнни ҫинчен пӗлтернӗ.

Вӑрҫӑ пуҫланнӑ.

Авиаторсем аэродрома чупса ҫитнӗ кӑна, полк командирӗ юсавлӑ самолетсене тылри аэродрома илсе кайма приказ панӑ, техниксене аэродрома тӑшман десанчӗсенчен сыхлама хушнӑ.

Георгий Антонов, аэродрома ҫитсен, хӑйӗн тусне Иван Алексеева курасшӑн пулнӑ. Анчах ниҫта та тӗл пулайман. Часах эскадрилья адъютанчӗ кӗтмен хыпар пӗлтернӗ:

– Асӑрханулла та хӑюллӑ пулӑр, юлташсем! Хӑрушӑ вӑрҫӑ малтанхи минутрах пире ҫывӑх туссенчен уйӑрчӗ. Иван Алексеев...

Адъютант малалла калайман – ҫывӑххах хура тӗтӗм капанӗ ҫӗкленнӗ.

«Пӗтрӗ иккен манӑн тусӑм», – шухӑшланӑ Георгий Антонов сержант.

Авиаторсем, вӗтлӗх витӗр чупса, тӑшман флангне тухнӑ.

– Тӑван ҫӗршывшӑн! Малалла! – янӑраса кайнӑ таврара. Боецсем тӑшман еннелле ыткӑннӑ. Фашистсем ҫакна кӗтмен-мӗн, пулемет вырнаҫтарса лартнӑ та ун хӳттипе каялла чакма тытӑннӑ. Тӑшман вӑйлӑн пени авиаторсене малалла кайма чарнӑ.

– Пулемета сирпӗтме ирӗк парӑр, – офицер патне пынӑ Иван Алексеев ентешӗ Георгий Антонов сержант.

Чӑнах та, ҫакна унран лайӑххах кам тума пултартӑрха? Вӑл курсант чухнех гранатӑна чи инҫете ывӑтнӑ, винтовкӑпа тӗл пенӗ, штыкпа ҫапӑҫмалли меслетсене те аван пӗлнӗ.

– Пурнӑҫлӑр, Антонов! Хӑвӑн тусшӑн тавӑрӑр тӑшмана!

Георгий ултӑ граната илнӗ те малалла, тӑхлан ҫумӑрӗ сапакан тӑшман пулемечӗ патнелле, хӑвӑрт шуса кайнӑ. Совет воинне фашистсен пулеметӗнчен уйӑрса тӑракан хушӑ минутсерен пӗчӗкленсе пынӑ. 70... 60... 50 метр...

«Ҫитет пулӗ», – шутланӑ Антонов. Ҫав вӑхӑтрах, чӗркуҫҫи ҫине ҫӗкленсе, пӗр граната хыҫҫӑн теприне ывӑтнӑ. Гитлеровецсен пулемечӗ шӑпланнӑ.

– Тӑшмана тарӑхнипе хӑраса тӑмарӑм пулас. Иван вилӗмӗшӗн, ҫывӑх юлташӗсемшӗн тавӑрас килчӗ, – аса илет халӗ ҫав кунсене Георгий Антонович.

...Хурлӑхлӑ хыпар Исетерккӗне те ҫитнӗ. Полк командирӗ Татьяна Николаевнӑпа Алексей Илларионовича вӗсен юратнӑ ывӑлӗ вӑхӑтсӑр вилни ҫинчен пӗлтернӗ. «Хамӑрӑн ҫапӑҫури юлташа ялана асра тытӑпӑр. Тӑван ҫӗршыв чысне сыхласа ҫамрӑк пурнӑҫне панӑ вӑл. Иванпа унӑн юлташӗсен вилӗмӗшӗн тӑшмана тавӑрма тупа тӑватпӑр».

Иван вилни ҫинчен пӗлсен, Иваново облаҫӗнче ӗҫлекен Григорипе Александр тӳрех ҫар комиссариатне кайнӑ та хӑйсене фронта яма ыйтнӑ. Часах Исетерккӗне телеграмма ҫитнӗ: «Атте-анне, ан пӑшӑрханӑр. Хамӑр ирӗкпе фронта тухса каятпӑр. Иван вилӗмӗшӗн тавӑратпӑрах», – пӗлтернӗ ывӑлӗсем.

## Егор АЛЕКСЕЕВ



Ҫара кайиччен вӑл «Ядро» колхозри комсомол организацийӗн секретарӗ пулнӑ, 1938 ҫултанпа – Совет Ҫарӗнче. Шурӑ финсене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ. Унтан Тӑван ҫӗршыв Аслӑ вӑрҫинче нимӗҫ фашисчӗсемпе кӗрешнӗ. 1943 ҫулхи декабрьте Житомир ҫывӑхӗнчи ҫапӑҫура тӑшман дзотне хӑйӗн ӳчӗпе хупласа паттӑрла вилнӗ.

### Хаклӑ хӑнасем

1944 ҫул. Ҫуллахи пӗр каҫхине Истерккӗ ялне темле майпа салтак-фронтовиксен ушкӑнӗ килсе ҫитнӗ. Вӗсен кам патӗнче те пулин ҫӗр каҫмалла пулнӑ. Ҫакна илтсенех, Татьяна Николаевна салтаксем патне тухса чупнӑ. Унӑн питӗ пӗлес килнӗ: халӗ мӗнле унта, фронтра? Хӗрарӑмӑн пӗтӗм ҫемйи вӑрҫӑра-ҫке-ха.

Татьяна Николаевна, вырӑсла начар пӗлет пулин те, салтаксене хӑнана чӗннӗ:

– Лайӑх ман патӑмра, ӑшӑ. Ӗне сӑвӑп. Ҫӗрулми те пӗҫерсе парӑп...

– Аппаланма кирлӗ мар, инке. Пирӗн пурте пур. Тин кӑна апатлантӑмӑр эпир. Выртма чӗннӗшӗн тавтапуҫ, – тенӗ салтаксенчен пӗри.

Татьяна Николаевна хӑнасем валли ыраш ҫӑкӑрӗ кӑларнӑ, ҫӗрулми пӗҫерме лартнӑ. Пӗр чӳлмек сӗт туртарнӑ.

– Ҫийӗр, ӗҫӗр, ывӑлӑмсем...

Лешсем вара, сӗтел хушшине ларас вырӑнне, стенасем ҫинчи сӑнӳкерчӗксене пӑхма пуҫланӑ. Сӑнӳкерчӗксем стена туллиех пулнӑ. Пӗрне Григорий Хасан патӗнчи ҫапӑҫусем хыҫҫӑн ӳкерттерсе янӑ. Тепринче – Егор винтовкӑпа тӑнӑ...

Салтаксенчен пӗри (Павлик ятли) Егор сӑнӳкерчӗкӗ патне пынӑ та сӑнран улшӑнса кайнӑ:

– Юлташсем! Ку Егор Алексеевич вӗт! Пирӗн командир пулни! Инке, инке, тӗрӗс калатӑп-и эпӗ? Егорка вӗт ку?

– Тӗрӗс, ачам. Ку ман Егорка... Эсир ӑна пӗлнӗ-и? Эсир унӑн юлташӗсем-им?

– Ҫапла, инке, пӗлнӗ. Унпа пӗр отделенире службӑра тӑнӑ. Ҫапӑҫӑва та пӗрле кайрӑмӑр, окопсенче те юнашар выртнӑ, пуласлӑх ҫинчен те пӗрле ӗмӗтленнӗ. Анчах пӗр ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче...

Павлик вара Егор амӑшне ывӑлӗ мӗнле вилни ҫинчен каласа панӑ.

...Татьяна Николаевна ҫӳлӗк ҫинчи хут ҫыххине илнӗ те сӗтел ҫине сарса хунӑ. Павлик ӳкерчӗкенсе пӗтнӗ, куҫҫулӗпе исленсе сарӑхнӑ ҫырӑва алла илсе вулама пуҫланӑ:

«Сирӗн ывӑлӑр Егор Алексеев паттӑрла пуҫне хучӗ. Хаяр тӑшмана ҫӗнтерессишӗн харсӑр кӗрешрӗ вӑл. Совет халӑхӗ мирлӗ те телейлӗ пурӑнтӑр тесе, гитлерла фашизма аркатса тӑкассишӗн хӑйӗн пурнӑҫне шеллемерӗ. Сирӗн ывӑлӑрӑн Егор Алексеевичӑн паттӑрлӑхӗпе эпир мухтанатпӑр тата ҫапла шантарса калатпӑр: унӑн вилӗмӗшӗн тӑшмана тивӗҫлипе тавӑрӑпӑр. Иккӗленмелли ҫук, унӑн паттӑрлӑхне пирӗн халӑх нихҫан та манмӗ. Егор паттӑрлӑхӗ – мӗнпур ӳссе ҫитӗнекен ӑрушӑн ырӑ тӗслӗх. Вӑрҫӑ пӗтсен, ҫынсем ун ятне чысласа асӑнӗҫ.

3-мӗш батальон командирӗ – аслӑ лейтенант М.ГОРДИЕНКО».

– Ҫапла, пурччӗ пирӗн ун пек комбат, – шӑплӑха татнӑ Павлик. – Пурччӗ, анчах вӑл Соколец ялӗ ҫывӑхӗнче пуҫне хучӗ. Питӗ хӑюллӑ та хастарччӗ вӑл, салтаксемшӗн ҫав тери тӑрӑшатчӗ...

Чылайччен каласса ларнӑ ҫав каҫхине Татьяна Николаевнӑпа салтаксем.

**(Малалли пулать).**

# Хаваслӑ 2015 самант

## Ребус



**_Акӑлчансен паллӑ писателӗ С.Ричардсон ҫырнӑ ҫунатлӑ сӑмахсем вуланӗҫ._**

## Сӑмах вӑчӑри




1. А.Г.Николаев космонавт летчик ҫуралнӑ ял. 2. Тӗнче уҫлӑхне карап ӑшӗнчен тухнӑ пӗрремӗш космонавт. 3. А.Николаев вӗҫнӗ космос карапӗ. 4. Тӗнче уҫлӑхӗ. 5. А.Николаевпа пӗрле «Союз» карапра пӗрле тӗнче уҫлӑхӗнче вӗҫнӗ космонавт. 6. Н.Теветкелӗн А.Николаева халалланӑ сӑвви. 7. Космонавтсем кӑмӑллакан «Мы верим, друзья...» юрӑ сӑмахӗсен авторӗ. 8. Шуршӑлта вӗҫтернӗ ыйхӑ,\ Амӑшӗн ... ҫунать.\ Савнӑҫпа пӗр пысӑк хуйхӑ\ Ун ӑшне вӑркаттарать. (М.Волкова ҫырнӑ «Кӑвак инҫет» поэмӑран). 9. Пӗчӗк планета.

## Криптограмма



**Кунта чӑваш сӑвӑҫин Н.Теветкелӗн ҫуркунне ҫинчен ҫырнӑ йӗркисем вуланӗҫ.**

I. 9, 1, 9, 17, 3, 11 – Ҫурхи чечек.
II. 19, 8, 10 – Ҫуркунне юханшыв витӗннӗ пӑр ҫине тапса тухакан шыв.
III. 13, 1, 14, 4 – Европӑри ҫӗршыв.
IV. 17, 3, 12, 12, 1, 9, 16, 12, 2, 16, 10, 10, 1 – Чӑваш халӑх писателӗн Л.Агаковӑн «ҫуркунне» сӑмахпа ҫырӑннӑ повеҫ ячӗ.
V. 8, 7, 11, 8, 19, 4 – Ҫуркунне ... авӑтмасӑр шыв ӑшӑнмасть (сӑнав).
VI. 5, 6, 7, 2, 8, 11 – ... пӗчӗк те, хакӗ хаклӑ (ват. сӑм.).
VII. 18, 15, 11, 8 – Чӑваш Республикинчи юханшыв.

## Сӑмахкаҫмӑш

**Кашни тупсӑм вырӑс алфавитӗнчи малтанхи А, Б, В, Г, Д, Е, Ж, З саспаллисемпе пуҫланаҫҫӗ.**



**Сылтӑмалла:** 5. Чӳрече карри. 7. Атӑл юппи. 8. Раҫҫейре чи малтан велосипед шутласа кӑларнӑ ӑстаҫӑ. 10. В.Краснов-Асли романӗ. 11. Бадминтон вӑййин хатӗрӗ. 12. Производство предприятийӗ. 14. Ӗлӗкрех анлӑ усӑ курнӑ электричество ҫутӑ хатӗрӗ. 15. «Ромеопа Джульетта» хайлавра ҫырса кӑтартнӑ вырӑн. 16. Чӑваш сӑвӑҫисен хайлавӗсене вырӑсла чылай куҫарнӑ тӑлмач. 18. ... Брежнева, Уланова, Волчек. 20. Пӑяв, кантра. 21. Хими элеменчӗ, галоген. 23. Иордани, Ирак, Тунис тата ытти ҫӗршывсен укҫи. 24. Порт-Артуршӑн пынӑ ҫапӑҫура «Петропавловск» броненосецра пуҫне хунӑ вырӑссен паллӑ ӳнерҫи. 25. Умри ҫывӑх вӑхӑт, кун. 26. Кухньӑри ӗҫ хатӗрӗ.

**Аялалла:** 1. Авалхи кӑнтӑр славянсен ҫемье общини. 2. Тӑрӑ шывра пурӑнакан чӗрчун. 3. «Ҫӗнтерӳ» орденне тивӗҫнӗ Маршал, 4 хутчен Совет Союзӗн Геройӗ. 4. Хрустальтен хатӗрленӗ ӗлӗкхи савӑт-сапа. 6. Французсен паллӑ математикӗ. 7. Чӑвашран тухнӑ пӗрремӗш архитектор. 8. Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче вӗрентекен пулса ӗҫленӗ поэт, фольклорист. 9. Вырӑссен паллӑ архитекторӗ. 12. Совет космонавчӗ. 13. Аслӑ шкулти факультет пуҫлӑхӗ. 16. Атӑл тӑрӑхӗнче ҫуралнӑ тӗнчипе паллӑ писатель. 17. Йывӑҫ. 18. Кушак йӑхне кӗрекен чӗрчун. 19. Армении паллӑ кӗнеке издательстви. 22. Литва халӑх поэтесси. 23. Французсен паллӑ энциклопедисчӗ, писателӗ, философӗ.

## Анаворд



1. Тӗнчере кашни ҫын пуҫне ҫак хурт-кӑпшанкӑ пӗр миллион тивет. 2. ...ӑн савнасси ҫаран ути ҫуличчен (ват.сӑм.). 3. Пирӗн пата хӗлле вӗҫсе килекен кайӑк. 4. Вӗҫет каять, сасси ҫинҫе, сӑмси вӑрӑм; кам ӑна вӗлерет – юн тӑкать (туп.юм.). 5. Вӑрманти пӗчӗк чӗрчун. 6. Кӑнтӑр Азири, Шри-Ланка, Суматра утравӗсем ҫинчи вӑрмансенче пурӑнакан илемлӗ кайӑк. 7. Йӑва ҫавӑрман вӗҫенкайӑк. 8. Пирӗн тӑрӑхри вӗҫенкайӑк. 9. Пирӗн тӑрӑхри вӗҫенкайӑк.

**Паллӑ тунӑ юпара чӑваш писателӗ Мӗтри Кипек ҫырнӑ роман ячӗ вуланӗ.**

_Юрий **ФРОЛОВ**_ **(Шупашкар)** _хатӗрленӗ._